24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
24
ЭРНЕКУН
19 (5734) №

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

## Вăрман хатĕрлевĕн планне ăнăçлăн тултарассишĕн

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вăрман хатĕрлевĕнче 1941 çулти пĕрремĕш квартална çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен постановлени йышăнчĕç. Ку постановлени вăрман хатĕрлес тата турттарас ĕçĕн планне пурнăçлама кирлĕ пит те пысăк вăй пулса тăрать.

Партипе правительство вăрман ĕçĕнчи работниксене кулленех пулăшса, ертсе пыраççĕ. Вăрман промышленносне çĕнĕ техникăпа пуянлатнă. Партипе правительство вăрмана çăвĕнăлăн хатĕрлессине йĕркелеме тăрăшаççĕ. Уйрăмăнах хĕллехи сезонпа туллин усă курма кирли çинчен пĕр хут кăна мар асăрхаттарнă. Кун пирки партин XVIII съезчĕ те ятарласах кăтартса хăварнă. Çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси те çавăнтанах тухса тăрать. Съезд решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, вăрман хатĕрлес ĕçре хĕллехи ырă условисемпе анлăн усă курса, çĕршыва хуçалăх строительствинче тата оборона ĕçĕнче кирлĕ чухлех вăрман хатĕрлесе парассишĕн кĕрешмелле.

СССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă тăрăх, пирĕн республикăра çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность январĕн 23-мĕшпе апрелĕн 1-мĕшчен пырать. Партипе правительство пирĕн республикăна çакăн пек задани панă: 800 пин кубометр вăрман касмалла, 740 пин кубометр турттармалла, 200 пин кубометр тивĕслĕ пункт-сене турттарса пымалла. Пирĕн республикăн кăçал пĕрремĕш квартална кăна иртнĕ çул пĕтĕм çулталăкра касса хатĕрленинчен ытларах вăрман касса хатĕрлесе турттарса кăлармалла. Пархатарлă та ответлă ĕç!

Халĕ ĕнтĕ вăрманта ĕçлекенсен йышĕ пысăкланать. Çак кунсенче вăрманта ĕçлекенсен йышĕ заданине пурнăçа кĕртме кирлĕ чухлех пулĕ. Вăрмана çуран е лашапа ĕçлеме тухнă колхозниксемпе единоличниксем тĕп ĕçукçи, çавăн пекех прогрессивлă ĕçукçи илеççĕ тата вĕсене премиадбавка шутласа параççĕ. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1938 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнче йышăннă постановлени вĕсемшĕн пĕтĕмпех тивĕслĕ пулса юлать. Расценкăран ирттерсе тата тунă ĕçшĕн прогрессивлă майпа илнисĕр пуçне, тăрăшса, пикенсе ĕçлекен работник премиадбавка илме пултарать. Партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен çакăн çинчен çуран е лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность йĕркипе вăрмана ĕçлеме пынă кашни çынна тĕплĕн ăнлантарса парас пулать.

Вăрман хатĕрлекен организацисемпе договорсем тунă тăрăх вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлекен рабочисем çуран тата лашапа ĕçлемелли повиннoçа хуттăнăç-çĕç. Вĕсем повинность йĕркипе ĕçлесе пĕтернĕ хыççăн хăйсем ĕçленĕ вырăнтах юлаççĕ. Вĕсене тĕп ĕçукçине, прогрессивлă ĕçукçине тата премиадбавкăсене, договор тăрăх кăçалхи кĕркуннехи тата хĕллехи сезонра ĕçе тухнă вăхăтранах шутласа тӳлеççĕ.

Çак кунсенче вăрманпромхозсенче, вăрман пункчĕсенче ĕçлекенсен йышĕ хăвăрт пысăкланĕ. Çакăн пек вăхăтра, паллах ĕнтĕ, вăрман ĕçĕнчи командирсен, инженерно-технически работниксен ролĕ тата ответлăхĕ калама çук нумай пысăкланать. Çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность туни вăрман пункчĕсемпе вăрманпромхозсен руководителĕсен ответлăхне чакармасть, вăл ответлăха татах та ытларах ӳстерет.

Халĕ вăрман хуçалăхĕнче нихăçан-хинчен те йĕркеллĕрех, оперативлăрах ĕçлени кирлĕ. Вăрман ĕçне хутшăнакан йышлă массăсене лайăх йышăнса илес пулать. Вăрман ĕçне хутшăнакан кашни çын валли малтанхи кунах хăйне тивĕслĕ вырăн пултăр, унăн ĕçсĕр, вăхăта усăсăр сая ярса çӳремелле ан пултăр, вăл ĕçе хастарлăн тытăнма пултартăр.

Ĕç участокĕсене палăртмалла, мастерсене, ĕç вăйĕсене тĕрĕс тăратса тухмалла, бригадирсене уйăрмалла, хăш вырăнтан, хăш çулпала, ăçта турттарса кăлармаллине палăртса хумалла. Пур ĕçсене те тĕплĕн шутласа хумалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 17-мĕшĕнче «СССР Вăрман Халăх Комиссариачĕн вăрман - хатĕрлевĕнче 1941 çулти 1-мĕш квартална çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен» йышăннă постановлени партипе совет органĕсене тата вăрман хатĕрлекен организацисене тимлĕн, большевикла хастарлăхпа ĕçлеме хушать. Постановлението пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе кулленех оперативлă ертсе пыни кирлĕ. Ĕçе тухмасăр пăрăнса юлма тăрăшакансене хирĕç çирĕппĕн кĕрешмелле.

Вăрман хатĕрлекен организацисенчи руководительсен задачи — ĕçе пур делянкăсенче те большевикла йĕркелесси пулать. Вăрмана ĕçлеме пынă кашни çын пысăк тухăçлăхпа ĕçлетĕр, хăйĕн ĕç нормине малтанхи кунсенчен пусласах ытлашшипех тултарса пытăр.

Хатĕрленĕ йывăçа турттарса кăларасси çине уйрăмăнах вăйлăн çавăрăнса пăхмалла. Кăçал касса хатĕрленĕ йывăçа çĕнĕ стройкăсем тунă çĕре кăçалах çитерсе парас пулать. Çавăнпа та вăрман юхтарас ĕçе халех хатĕрленсе пымалла. Шыв çулĕсемпе туллин усă курасси—пысăк задача пулса тăрать. Çавăн пек тусан кăна йывăçсене чугунçулсем тăрăх турттарассинчен хăтăлма пулĕ. Касса хатĕрленĕ йывăçа çийĕнчех юханшыв хĕрне турттарса кăлармалла. Ку ĕçе хастарлăн, паттăррăн тытăнас пулать.

Вăрманта ĕçлекенсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те кирлĕ мерăсем йышăнмалла. Ĕçлеме пынă çынсене ăçта вырнаçтарассине халех татса памалла. Общежитисем тума май пур кашни баракпа, кашни уйрăм çуртпа усă курас пулать.

Хальхи вăхăтра вăрманта ĕçлекен рабочисем, техниксем, инженерсем хушшинче партин XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Вăрман ĕçĕнчи ударниксемпе стахановецсем çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерӳсем тăваççĕ. Ун çинчен калакан тĕслĕхсем сахал мар.

Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрвашри «Красная Чувашия», Сăкăтпуçĕнчи «Хĕрлĕ Октябрь», Йăнтăрчри «Çулăм» колхозсем ВКП(б) XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле вăрман хатĕрлевĕнче пысăк çитĕнӳсем тума хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Асăннă колхозсем иртнĕ çулăн IV-мĕш квартал планĕсене ытлашшипех тултарчĕç.

«Красная Чувашия» колхоз 940 кубометр, «Хĕрлĕ Октябрь» — 473, «Çулăм» — 200 кубометр йывăç хатĕрленĕ. Çак колхозсем хăйсен планĕсене халĕ ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

Вăрман ĕçĕнче стахановецсен хисепĕ кулленех ӳссе, йышланса пырать. Вăрман ĕçне халĕ çĕнĕрен хутшăнакансем хушшинчен республикипе паллă стахановецсем, ĕçри паттăрсем çуралĕç, вĕсем стахановецсен йышне çĕнĕ паллă ятсемпе пуянлатĕç. Вăрман ĕçне çĕнĕрен пыракансем те социализмлă ăмăртăва анлăн, хĕрӳллĕн хутшăнĕç.

## Вăрман хатĕрлеме массăллăн тухаççĕ

ЭЛЕК, январĕн 23-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Ефремкасси ялсоветне кĕрекен колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн вăрман хатĕрлевĕсенче 1941 çулти 1-мĕш квартална çуран тата лашапа ĕçлемелли тӳлевлĕ повинность тăвасси çинчен» кăçалхи январĕн 17 мĕшĕнче йышăннă постановление анлăн сӳтсе-явăрĕç. Колхозниксем партипе правительствăн çак паха мероприятине ырласа, январĕн 24-мĕшĕнче вăрман хатĕрлеме массăллăн тухма йышăнчĕç. Колхозниксем вăрман хатĕрлес плана срокчен тултарма пулаççĕ.

Ив. МОСЕЕВ.

## Ленин мавзолейĕ патĕнче

МУСКАВ, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Январĕн 21-мĕшĕнче, Владимир Ильич Вилнĕренпе 17 çул тултарнă кун, Ленин мавзолейне 18 пин çын ытла кĕрсе курнă.

Мавзолей алăкĕ уçăличчен нумай малтанах Хĕрлĕ площаде çынсен ушкăнĕсем пухăннă. Рабочисем, колхозниксем, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем, служащисем, студентсем, шкул ачисем этемлĕхĕн аслă генийне чысласа асăнма пынă. Çитĕннисем те, çамрăк ачасем те, пĕр чĕмсĕр, хуллен утса, Ленин тупăкĕ умĕне иртсе пынă.

## Агитаци ĕçне вăйлатса пырар

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. Суйлав кампанине ăнăçлăн ирттерме хатĕрленнĕ май, ВКП(б) райкомĕ агитколлективсен руководителĕсен районри семинарне тата районра парти активĕн пухуне ирттернĕ. Семинар хыççăн вырăнсенче агитаторсем агитаци ĕçне пуçарса янă.

СССР тата Чăваш АССР Верховный Совечĕсен Президиумĕсем кăларнă Указсене районри ĕççыннисем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Халĕ суйлав кампани пуçланнă май, районри мĕнпур колхозсенче Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе пыракан ăмăрту татах та вăйланчĕ. Суйлава пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн ĕççыннисем хăйсем çине татăклă обязательствăсем илеççĕ.

Халĕ ялсенче, колхозсенче массăллă-политикăллă ĕç анлăн сарăлса пырать. Ку вăхăтченех районра 28 агитколлектив ĕçленĕ пулсан, халĕ вара 43 агитколлектив ĕçлет. Чылай агитколлективсенче агитаторсем валли консультацисем ирттереççĕ. Юлашки кунсенче Турханти агитколлектив пухусенче, группăсенче калаçусем йĕркеллĕ ирттерчĕ. Агитколлективăн чи лайăх агитаторне Быков юлташа парти райкомĕ агитколлектив руководителĕ пулса ĕçлеме сирĕплетрĕ. Халĕ агитаторсем ĕççыннисем хушшинче агитаци ĕçне аван туса пыраççĕ. Агитаци ĕçне хуçалăхлă ыйтусемпе çыхăнтараççĕ.

Районра 41 суйлав участокĕ тунă. Участоксенчи суйлав комиссийĕсене туса ситернĕ. Суйлав çурчĕсене тупса хатĕрленĕ. Халĕ суйлав инвентарĕсене: урнăсене, кабинăсене т. ыт. те йĕркене кĕртеççĕ.

В. ТРОФИМОВ.

# Уйрăм округсенчи суйлав кампанийĕ

☆ ☆ ☆

### ШУПАШКАР СУЙЛАВ ОКРУГĔ

**Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕн**

## Иван Матвеевич Чарыков

**юлташăн кандидатурине тăратнă**

Январĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнче ĕçлекен рабочисен, служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидат тăратас ыйтăва сӳтсе-явăрĕ. Пухура 200 çын ытла пулчĕ.

Пухура комбинат инженерĕ Сергеев юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Эпĕ,—тет вăл,—хамăр комбинатри коллектив ячĕпе СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕн, çирĕп большевикăн, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕн **Иван Матвеевич Чарыков** юлташăн кандидатурине тăратма сĕнетĕп.

Кун хыççăн рабочи Астафьев тата сменнăй мастер Рыбаков юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем Сергеев юлташ сĕнӳне хапăл турĕç. Сергеев юлташ сĕнӳне пуху вăйлăн алă супса йышăнчĕ. Пуху çапла йышăнчĕ: «СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидата Ленин—Сталин партин шанчăклă ывăлне, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарне Иван Матвеевич Чарыков юлташа тăратас. Пуху И. М. Чарыков юлташран 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйланма балотировкăна тăма хăйĕн килĕшӳне пама ыйтать».

Кун хыççăн тир-сăран комбинатĕнчи рабочисен, служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕ Шупашкар суйлав округĕнчи мĕнпур суйлавçăсем патне чĕнсе каланине йышăнчĕ.

—★—

**Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем Шупашкар суйлав округĕнчи мĕнпур суйлавçăсене**

### ЧĔНСЕ КАЛАНИНЧЕН

Хаклă юлташсем! Эпир, Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем, хамăрăн пухура СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидат тăратасси çинчен сӳтсе-явса, çапла йышăнтăмăр:

СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама çирĕп большевика, Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн парăнса ĕçлекен çынна, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарне **Иван Матвеевич Чарыков** юлташа кандидата тăратăттăр.

Эпир шанса тăратпăр, Чарыков юлташ халăх шанăçне тӳрре кăларĕ, хăйĕн халăхĕшĕн тăрăшса ĕçлĕ, пирĕн социализмлă государствăн вăй-хăватне çирĕплетессишĕн, формипе наципе тата содержанийĕпе социализмлă культурăна малалла та чечеклентерсе пырассишĕн хăйĕн мĕнпур вăйне хурса кĕрешĕ.

Рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, служащисемпе студентсем, инженерсемпе техниксем, врачсем, учительсем—Шупашкар суйлав округĕнчи мĕнпур суйлавçăсем! Сире эпир СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатшăн сасăлама чĕнетпĕр.

Эпир сире суйлав кунĕнче—1941 çулти февралĕн 16-мĕшĕнче, пурте пĕр çын пек пулса, Чарыков юлташшăн сасăлама чĕнетпĕр.

Суйлав кампани Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине хатĕрленнессипе пĕр вăхăтра пуçланчĕ. Конференци уçăласси çинчен пĕлтернĕ хыççăн хулари тата республикăри ĕççыннисен производствăллă активлăхĕ пысăккăн ӳсрĕ. Нимĕн иккĕленмелли те çук, пулас суйлавсем çав çĕкленĕве татах та вăйлатĕç.

Суйлавçă юлташсем! Суйлав кампанине пирĕн предприятисенче производствăллă программăсене тултарнипе тата ирттерсе тултарнипе, хуçалăхăлăполитикăллă задачăсене пурнăçланипе, çуракине кăтартуллăн хатĕрленнипе, лайăх вĕреннипе, кашни хăйĕн вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа тата тăрăшса ĕçленипе, ĕç дисциплинине çирĕплетнипе, туса кăларакан продукци хисепне тата пахалăхне ӳстернипе, Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хуттăнса, хамăр çине илнĕ обязательствăсене срокчен тултарнипе паллă тăвар.

Большевиксен çĕнтерӳллĕ партийĕ тавра, халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ тавра татах та тачăрах пĕтĕçер!

Сывă пултăр Сталинла Конституци—социализм çĕнтерĕвĕсен Конституцийĕ!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван аслă Сталин!

* * *

Юлашкинчен пуху суйлавçăсен хулари суйлав умĕнхи пухуне кайма уполномоченнăйсем суйларĕ.

## Пысăк театрта пулса иртнĕ траурлă чаплă лару

Январĕн 21-мĕшĕнче, большевикла партине тата Совет государствине тăваканĕ аслă В. И. Ленин вилнĕренне XVII çул тултарнă кун, СССР Пысăк театрĕнче ЦК ВКП(б), МК тата МГК ВКП(б), Коминтерн Исполкомĕн, СССР Верховный Совечĕпе РСФСР Верховный Совет Президиумĕсен, ĕççыннин депутачĕсен Мускав область тата хула Совечĕсен, ЦК ВЛКСМ, МК тата МГК ВЛКСМ, ВЦСПС президиумĕн, рабочи-стахановецсен, ударниксен тата интеллигенцин траурлă чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ.

Театр залĕ çынсемпе тулса ларнă. Яруссем тăрăх бархат пысăк пусмасем çакнă, вĕсем çине Ленин хушса хăварнисене çирĕппĕн тата пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма чĕнекен лозунгсем çырнă. Сцена çинче шалта, боевой ялавсем патĕнче — çăрăн хисеплĕ хуралĕ. Владимир Ильичăн чĕрĕ чечексемпе çавăрса илемлетнĕ портречĕ çакăнса тăрать.

Президиум сĕтелĕ умне Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Каганович, Андреев, Микоян, Жданов, Берия, Шверник, Маленков, Димитров, Тимошенко, Шкирятов, Щербаков, Багаев, Булганин, Мехлис, Ярославский, Буденный, Кулик, Кузнецов, Михайлов, Попов, Черноусов, Пронин, Митин т. ыт. юлташсем тухаççĕ.

Сталин юлташа тата партипе правительство руководителĕсене нумайччен тăвăллă ováци туса кĕтсе илеççĕ. Пуртe ура çине тăрса çавтери пысăк çĕкленӳпе Сталин юлташа тата унăн соратникĕсене ăшшăн саламлаççĕ.

М. И. Калинин юлташ ларăва уçса, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçне Владимир Ильич Ленина ура çине тăрса чысласа асăнма ыйтать.

Пурте ура çине тăраççĕ. Оркестр траурлă марш вылять.

— Юлташсем, — тет М. И. Калинин, — эпир Ленинăн вилĕмсĕр вĕрентĕвĕпе пурăнса çĕнтеретпĕр. Пурне те çĕнтерсе пыракан ленинизм вăйĕ совет халăхĕн организацийĕпе дисциплини ӳссе пынинче, социализм тăвакан миллионшар совет çыннисен геройла ĕçĕсенче палăрса тăрать. Коммунистсен партийĕ тата совет халăхĕ Владимир Ильич Ленин кăтартса хăварнă çулпа, Сталин юлташ ертсе пынипе, шанчăклăн тата çирĕппĕн малалла пыраççĕ.

Доклад тума МК тата МГК ВКП(б) секретарьне А. С. Щербаков юлташа сăмах параççĕ.

Ларура пулнисем Щербаков юлташăн содержанийĕ докладне пысăк тимлĕхпе итлеççĕ. Щербаков юлташ хăйĕн докладне вĕçлесе: «Сывă пултăр ленинизм! Сывă пултăр тата нумай çулсем хушши пурăнтăр Сталин юлташ!» тесе каланине пурте пĕр çын пек пулса, социализм çĕнтерĕвĕсен организаторне тата çав çĕнтерӳсене тума хавхалантарса пыракана юратса тата парăнса, ура çине тăрса саламлаççĕ, Сталин юлташа чысласа нумайччен хĕрӳллĕ ováци тăваççĕ.

Щербаков юлташ докладĕ хыççăн М. И. Калинин траурлă чаплă лару хӳпăнни çинчен пĕлтерет.

Унтан пысăк концерт пулнă, вăл концерта столицăри чи лайăх артистсем хутшăннă.

### ЕТĔРНЕ СУЙЛАВ ОКРУГĔ

**Етĕрнери çу тата спирт завочĕсенчи рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕ 506-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕн**

## Яков Кузьмич Павлов

**юлташăн кандидатурине тăратнă**

Январĕн 23-мĕшĕнче Етĕрнери çу тата спирт завочĕсенче ĕçлекен рабочисен, служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидат тăратас ыйтăва сӳтсе-явăрĕ. Пухура 173 çын пулнă. Албутов юлташ суйлавсен пĕлтерĕшĕ çинчен каласа панă. Çу заводĕнчи ватă производственник П. Ф. Павлов юлташ сăмах илет.

— Эпĕ ватă рабочи, авалхи ылханлă пурнăçа пĕлетĕп. Ленин—Сталин партийĕ ĕççыннисене пусмăртан кăларчĕ, вĕсене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панă.

Эпĕ спиртзаводри тата çу заводĕнчи рабочисен, служащисен тата инженерно-технически работниксен коллективĕ ячĕпе 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чăваш Обком секретарĕн Яков Кузьмич Павлов юлташăн кандидатурине тăратăттăп. Ана Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ, вăл большевикла партин шанчăклă ывăлĕ, партипе халăх ĕçне чĕререн парăннă çын, халăх шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçа кĕртме пултарать.

Кун хыççăн инженер Коперсак юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче депутата чи лайăх, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекенсене, халăх пурнăçне лайăх пĕлекен, унăн интересĕсемшĕн кĕрешме пултаракан çынсене кăна суйлама кирлине палăртать. Çакăн пек çынсенчен пĕри вăл—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Яков Кузьмич Павлов юлташ пулать. Коперсак юлташ П. Ф. Павлов юлташ сĕнӳне тĕрĕс тесе шутлать. Пуху пĕрсаслă пулса 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕн Яков Кузьмич Павлов юлташăн кандидатурине тăратма йышăнать.

Пуху йышăннă резолюцире çапла каланă:

«Эпир халăхпа пĕрле пыракан кандидатсемшĕн сасăлатпăр. Эпир, Етĕрнери спирт тата çу завочĕсенчи рабочисем, служащисем тата инженерно-технически работниксем, 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама Яков Кузьмич Павлов юлташа кандидата тăрататпăр. Эпир Павлов юлташран çак асăннă суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Етĕрне суйлав округĕнчи мĕнпур суйлавçăсене пирĕн сĕнĕве хапăл тума, Павлов юлташăн пĕр шухăшлă пулса сасăлама чĕнетпĕр.

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ!».

—★—

### ВĂРМАР СУЙЛАВ ОКРУГĔ

**„Арабось“ колхоз членĕсен пухăвĕ Вăрмар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама**

## С. Е. Белолипецкий

**юлташăн кандидатурине тăратнă**

ВĂРМАР, январĕн 23-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Паян «Арабось» колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ.

11 сехет тĕлне колхоз правленине 200 çын ытла пухăннă. Вĕсем хăйсен суйлав умĕнхи пухуне колхоз производствинче пысăк çитĕнӳсем тунипе пынă. «Арабось» колхоз государство умĕнчи обязательствăсене пурне те тултарнă, кирлĕ фондсене йăлтах уйăрнă. Колхозри 5 ферма валли выльăхчĕрлĕх туянса çитерççĕ. Общественнăй хуçалăх вăйланса пырать. 1940 çулта çĕнĕрен вите, теплица, арман т. ыт. строительствăсем те тунă, вĕсене тума 143 пин тенкĕ расходланă. Колхозăн электростанцийĕ те часах ĕçлеме тытăнать, машинăсене илсе килнĕ. Колхозниксем ĕçкунĕ пуçне 4,8 килограмм тĕттырă, 50-шар пус укçа, пахча-çимĕç илеççĕ. Колхозник-стахановецсем К. Тимофеев, Л. Кузнецов, Г. Максимов т. ыт. те 200—250 пăт тĕттырă илеççĕ. Колхоз çуракине хĕрсех хатĕрленет. Вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ, машинăсене çак кунсенчех юсаса пĕтереççĕ, уя тислĕк тата ытти удобренисем турттараççĕ.

Колхоз председателĕ Малахиев юлташ пуху уçални çинчен пĕлтерет. Президиум суйланă хыççăн кун йĕркине çирĕплетеççĕ. Кун йĕркинче пĕр ыйту — Вăрмар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама кандидат тăратасси.

Чи малтанах колхозник Михаил Алексеев юлташ сăмах илет. Вăл СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн Степан Ефимович Белолипецкий юлташăн кандидатурине сĕнет.

— Белолипецкий юлташ,—тет вăл,—Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕ, вăл ВЧК—НКВД органĕсенче ĕçлесе, халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе пиçĕхнĕ, халăх шанăçне тӳрре кăларĕ. Çавăнпа та эпĕ Верховный Совета депутата суйлама С. Е. Белолипецкий юлташăн кандидатурине тăрататăп.

Ун хыççăн сăмах тухса каланă колхозниксем Анисимовăпа Степанов тата врач Степанов юлташсем Алексеев юлташ панă сĕнĕве ырласа, февралĕн 16-мĕшĕнче пурне те Белолипецкий юлташшăн сасăлама чĕнчĕç.

Пуху 499-мĕш №-лĕ Вăрмар суйлав округĕнчи мĕнпур суйлавçăсене чĕнсе каланине йышăнчĕ. Çав чĕнсе каланинче «Арабось» колхоз членĕсем Вăрмар округĕнчи суйлавçăсене кăçалхи февралĕн 16-мĕшĕнче хăйсен сасĕсене, пурте пĕр çын пек пулса, партин шанчăклă ывăлĕшĕн—Степан Ефимович Белолипецкий юлташшăн пама чĕнеççĕ.

М. ТИТОВ.

## В. И. Ленинăн Центральнăй музейĕнче „Лениниана“ залĕ уçăлнă

Мускавра В. И. Ленинăн Центральнăй музейĕнче январĕн 20-мĕшĕнче çĕнĕ экспонатсемпе пуянлатнă тата йăлтах çĕнĕрен йĕркеленĕ зал—«Лениниана» залĕ уçăлнă. Нумай экскурсантсем кунта пулма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Залра В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн тĕнчери халăхсен тĕрлĕ чĕлхисемпе кăларнă произведенийĕсен изданийĕсене, çççыннисен аслă çулпуçĕсем çинчен асаилнисене, художествăллă тата музыкăллă произведенисене пухнă.

Зала кĕнĕ çĕрте мраморлă икĕ хăма çинче пролетариллĕ революцин çулпуçĕсен ĕçĕсене тĕнчери 107 халăх чĕлхипе пичетлесе кăларнине кăтартса панă.

Мраморлă хăмасем хушшинче—Маркăн, Энгельсăн, Ленинăн, Сталинăн барельефĕ. Унтан аяларах çавăрăнакан глобус. Глобус çинче Ленинпа Сталинăн произведенийĕсене çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнле-мĕнле пунктсенче пичетлесе кăларнине çутă пăнчăсемпе кăтартнă.

Вĕçĕ пысăк шкафра В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн сочиненийĕсен пуххипе суйласа илнĕ произведенийĕсене майлаштарса хунă. Пĕр шкафĕнче кĕнекесен шутĕнче И. В. Сталинăн сайра тĕлпулакан изданийĕ—суйласа илнĕ произведенисен пятитомникĕ, ăна Китайра походсем тунă условисенче пичетлесе кăларнă.

Залăн уйрăм разделĕсенче Ленинпа Сталинăн произведенийĕсене Советлă республикăсенчи халăхсен, Çурçĕрти тата Хĕвелтухăçĕнчи халăхсен чĕлхисемпе пичетлесе кăларнине кăтартса панă.

Залра Ленинпа Сталинăн коопераци, колхоз строительстви ыйтăвĕсемпе тата комсомол задачисем çинчен çырнă произведенийĕсене майлаштарса хунă. Сталинла Конституци текстчĕн, Советсен Пĕтĕм Союзри Чрезвычайнăй VIII съездĕнче Сталин юлташ тунă докладăн изданийĕсене анлăн тăратнă. Ленинпа Сталин çинчен çырнă художествăллă тата музыкăллă произведенисене уйрăмăн тăратнă, биографиллĕ разделта—Ленин çинчен Н. К. Крупская, А. И. Ульянова-Елизарова, К. Цеткин, М. Горький асаилнисем, Сталин юлташ çинчен калакан литература.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» тĕрлĕрен чĕлхесемпе пичетлесе кăларнă 60 экземплярне уйрăм витрина туса йĕркеленĕ.

(ТАСС).

# ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

## Решенисем нумай, ĕçĕ çук

Совет учрежденисенчи парторганизацисен задачи пысăк та ответлă. Вĕсен аппарата халăхпа тачă сыхăну тытакан тăвассишĕн, тирпейлĕхшĕн, тĕптĕрĕс ĕçлекен тăвассишĕн тăрăшмалла. Парторганизацисен учрежденире ĕçлекен работниксене сăнаса вĕренмелле, вĕсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерсе пырассишĕн куллен ĕçлемелле, ĕç дисциплинине пур майсемпе те çирĕплетесе пымалла. Ĕçри ситменлĕхсем çинчен çӳлти органсене вăхăтра сигнал парса тăмалла, çав ситменлĕхсене пĕтерме учреждени руководительне пулăшмалла.

Анчах, Государство Банкĕн Чăваш республикинчи конторинчи пуçламĕш парторганизаци хăйĕн умĕнче тăракан тĕп задачăна тимлĕн пурнăçа кĕртсе пыма тытăнман-ха. Час-часах вăл хăйне тивĕçлĕ мар функцие илет. Парти пухăвĕнче ыйтусене сӳтсе-явнă чухне хăйсен ситменлĕхĕсем çинчен мар, районсенчи организацисен ĕçĕсем çинчен каласаççĕ. 1940 çулти ноябрь уйăхĕнче пулнă пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн IV-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене сӳтсе-явнă. Пренире тухса каланă коммунистсем пурте пекех совет организацисем хула çывăхĕнчи колхозсене контроллесе тăманни çинчен критикленĕ. ВКП(б) хула комитечĕпе хула совечĕ пригороднăй хуçалăха организацилес пирки резолюцисем йышăннинчен малах кайман, тенĕ. Юлашкинчен, хăйсен решенинче вĕсем çапла каласа хăварнă: колхозсенче общественăллă выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленесси государственăллă пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа пĕрлех парторганизаци çакна палăртăвать: общественăллă выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетме колхозсене кивçен панă укçа- тенкĕпе мĕнле усă курнине Госбанк системи енчен контроллесе тăрасси пулман, ку ĕç çине пачах çителĕксĕр çаврăнса пăхнă. Çавăнпа та, парти пухăвĕ колхозсенче общественăллă выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетме паракан укçа-тенкĕпе мĕнле усă курнине Госбанк енчен контроллесе тăрасине вăйлатма кирлĕ тесе шутлать, тенĕ.

Çавнашкал решенисем ытти чухне те пулканă. Июнь уйăхĕнче хулари благоустройство çинчен парти пухăвĕнче сӳтсе-явнă. Çав ыйту тăрăх решени йышăннă чухне Шупашкар хула советне çаксене тума хушса хăварнă пулнă: урамсенчи çамрăк йывăççемпе чечексене пăхса тăрассине хула ĕççыннисем çине хурса панине пĕлтерме, Ярославский урамĕнче мунча патне каçма урам урлă тротуар сарма тата коммунальнăй çурт-йĕрсене ремонт тăвассине йĕркеллĕ ирттерме кирли çине кăтартса хăварнă. Çавăн пекех пуçламĕш парторганизаци госбанк управляющине те час-часах директивăсем парса пынă.

Паллах, çак сӳлте кăтартса панă фактсем Госбанкри пуçламĕш парторганизацин функцине кĕрекен ыйтусем пулман. Çав хушăрах парторганизаци хăй умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕрине—сотрудниксем хушшинче партиллĕ-политикăллă воспитани ĕçне туса пырассине манса хăварнă. Госбанкра ĕçлекен сотрудниксенчен 4 çын çеç «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе пĕтернĕ. Парти историне вĕренмелли кружок та йĕркеллĕ ĕçлемест. Малтанхи вăхăтра кружокра вĕренме 25 çын таран çырăннă пулсан, халĕ 10—12 çын çеç вĕренеççĕ.

Пуçламĕш парторганизацин коммунистсемпе беспартийнăйсен политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерсе пырас тĕлĕшпе решенисем те нумай пулнă. Иртнĕ çулти февраль уйăхĕнче пулнă пухура марксизм-ленинизма вĕренекенсене ялан пулăшу парса тăма, сотрудниксем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне туса пырас пулать, тесе йышăнса хăварнă пулнă. Çавăн хыççăнах, июнĕн 5-мĕшĕнче пулнă парти пухăвĕнче агитколлектив ĕçне тĕпренех вăйлатма кирли çине кăтартса хăварнă. Çав пухурах агитатор пулса ĕçлеме уйăрнă коммунистсем агитаци ĕçне мĕнле туса пыни çинчен кашни пухурах парторганизаци секретарьне информаци туса пыма хушнă. Пĕррехинче пур коммунистсене те парти историне 1940 çул хушшинче вĕренсе тухмалла, тесе решени йышăннă. Çавăн пек решенисем каярахпа та нумай пулнă. Анчах вăл решенисене пурнăçа кĕртессишĕн парторганизаци секретарĕ Денисов юлташ пачах çителĕксĕр тăрăшнă. Агитколлективăн ĕçĕ пачах куранмасть. Денисов юлташ шучĕпе учрежденисенче 8 сехетлĕ ĕçкунĕ çине куçнă хыççăн сотрудниксем хушшинче массăллă ĕçсем туса пыма пушă вăхăт та юлмасть. Ку шухăша вăл тĕрлĕ примерсемпе çирĕплетсе пама тăрăшать. Çак шухăш Госбанкри общественăллă организацисем хушшине те часах сарăлнă. Иртнĕ çулсенче общественăллă организацисем хăшпĕр мероприятисем ирттернĕ пулсан, халĕ вăл организацисен ĕç планĕсем те çук.

Осоавиахим организацин ĕçне вăйлатасси çинчен асăнмасăр пĕр пуху та иртмест, апла пулин те унăн ĕçĕ çук та пĕрех. Парторганизаци хăйĕн решенийĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине интересленмест. Акă, пĕррехинче, Хĕрлĕ Çарта пулман коммунистсене çаран пĕр-пĕр специальноçне вĕренме хушса хăварнă пулнă, вăл решени çаплипех пурнăçланмасăр юлнă. Иртнĕ хĕлте коммунистсене йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентетпĕр, тесе 20 мăшăр йĕлтĕр илсе, вĕсене алла валеççе панă. Çав йĕлтĕрсем халĕ те коммунистсен аллинчех. Апла пулин те хĕле кĕнĕренпе коммунистсенчен пĕри те, охотниксене шута илмесен, йĕлтĕр çине тăрса курман. Çак тĕслĕх ĕнтĕ Госбанкра ĕçлекен работниксене спорт ĕçне хăнăхтарас пирки парторганизаци сăмах вĕçĕн çеç каласма юратни çинчен калать. Çавăн пекех халăх творчествин смотрĕнче Госбанкра ĕçлекен работниксен хор кружокне 500 тенкĕ укçа парса премиленĕ пулнă. Çав укçана кайран вечер туса салатса янă.

Госбанкра ĕçлекенсен коллективĕ хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатас пирки «Червонец» ятлă стена хаçачĕ те питĕ çителĕксĕр кĕрешет. ВКП(б) хула комитечĕ «Червонец» хаçатра партиллĕ пропаганда ыйтăвĕсем çинчен ытларах çырса тăма кирли çине кăтартса панă хыççăн та редколлеги хăйĕн ĕçне çĕнетмен. Стена хаçачĕ çине çырса тăракансен йышне ӳстерес пирки те редколлеги енчен кирлĕ ĕçсем туни пулман. Июнĕн 16-мĕшĕнче редколлегин отчетне пуçламĕш парторганизацин пухăвĕнче итленĕ хыççăн, малашне стена хаçатне уйăхра икĕ хут кăларма, стена хаçачĕ çине çырса тăракансемпе кулленех ĕçлеме, социализмлă ăмăртупа ĕç дисциплини çинчен анлăн çутатса пыма йышăннă. Çакăн хыççăн та хаçат тавра актива явăçтарайман. Парторганизаци секретарĕ Денисов юлташ хăй те стена хаçачĕ çине çырса тăмасть.

Госбанкри пуçламĕш парторганизацин аппарата тĕптĕрĕс ĕçлекен тăвассишĕн нумай ĕçлемелле. Çавăнпа та аппаратра ĕçлекен кашни коммунистăн задачи—пур ĕçре те кăтартуллăн ĕçлесе ытти работниксене пример кăтартса паракансем пулласси. Вĕсен партипе государство дисциплинине тӳррĕн пăхăнса тăракансем пулмалла. Аппарат ĕçне лайăхлатассишĕн, совет учрежденинче большевикла йĕркелĕх тăвассишĕн парторганизацин куллен кĕрешмелле. Çавăн чухне кăна парторганизацин авторитечĕ те, ролĕ те хăпарма пултарать.

**А. ГРИГОРЬЕВ.**

## Пулă тытас ыйту тăрăх Совет Союзĕпе Япони хушшинче тунă килĕшӳ

### ПРОТОКОЛ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Япони хушшинче пулă тытасси çинчен 1928 çулти январĕн 23-мĕшĕнче туса алă пусса çирĕплетнĕ тата 1936 çулти майăн 25-мĕшĕнче, çав çулти декабрĕн 28-мĕшĕнче, 1937 çулти декабрĕн 29-мĕшĕнче, 1939 çулти апрелĕн 2-мĕшĕнче тата çав çулти декабрĕн 31-мĕшĕнче протоколсем çырса малалла тăснă Конвенци срокĕ 1940 çулти декабрĕн 31-мĕшĕнче тухнă пирки тата

1940 çулти декабрĕн 31-мĕшĕнче çĕнĕ Конвенци туман пирки, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Япони Правительствисем çакăн пек халĕ Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Япони Правительствисем хушшинче каласусем пыраççĕ, ăна 1941 çулта тăваççĕ.

Хăйсен Правительствисем тивĕçлипе полномочи панă тăрăх аяларах алă пуснă çынсем çак Протокола алă пуса çирĕплетеççĕ.

Протокола Мускав хулинче, 1941 çулти январĕн 20-мĕшĕнче, икĕ экземпляр туса çырса хатĕрленĕ, çак вăхăт сиован 16-мĕш çулĕн пĕрремĕш уйăхĕн 20-мĕш кунĕпе танлашать.

**I-МĔШ СТАТЬЯ**

1928 çулти январĕн 23-мĕшĕнче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Япони хушшинче пулă тытасси çинчен алă пусса çирĕплетсе тунă Конвенци тата çавăн пекех ун çумне хурса янă документсем те 1941 çулти декабрĕн 31-мĕшчен хăйсен вăйпе çухатмаççĕ.

**II-МĔШ СТАТЬЯ**

Çак Протокола çĕнĕ Конвенципе уламăртармалла, вăл Конвенци çинчен ни Правительствисем çакăн пек статьясемпе килĕшнĕ:

1. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви 11, 12, 13, 14, 18, 19, 21, 22, 27, 28, 29, 30, 31, 32, 33, 34, 36, 37, 39, 42-мĕш №-лĕ консерва завочĕсене тата пулă тытма вĕсем çумне çирĕплетсе панă 104, 105, 106, 107, 108, 109, 110, 708, 742, 743, 757, 758, 766, 767, 775, 776, 782, 829, 830, 837, 838, 839, 842, 847, 948, 854, 855, 857, 858, 860, 861, 866, 867, 975, 980, 981, 984, 985, 986-мĕш №-лĕ участоксене Япони подданнăйĕсем эксплоатацилесси çинчен 1928 çулти ноябрĕн 3-мĕшĕнче тунă уйăрăм договорсен вăйне, вăл договорпа çыхăнса тăракан документсем тата кайран хушса тунă килĕшӳсен вăйне, халиччеенхи условисем тăрăх 1941 çулти декабрĕн 31-мĕшне çитиччен тăсма килĕшет.

2. Советăн Государство промышленноçĕн 1941 çулта лосось йăхне кĕрекен пулăсене халиччеенхи нормăпах тытмалла пулать, вăл шăпах 5 миллион пăт пулать.

3. Арендăна панă договорсен срокĕсем 1940 çулта тухнă пулă тытмалли 410, 527, 529, 553, 557, 558 тата 1083-мĕш №-лĕ участоксене 1941 çулта торгине тăратмалла пулать.

4. Японин пулă промышленникĕсен, ССР Союзăн Лăпкă океан çыранĕсенчи пулă тытмалли участоксен арендаторĕсен, çавăн пекех тата консерва завочĕсене тата пулă тытма вĕсен çумне çирĕплетнĕ участоксене эксплоатацилеме ССР Союзĕн Правительствипе уйăрăм договорсем тунă Япони подданнăйĕсен 1941 çулта, халиччеенхи пекех, 100 тенкĕлĕх облигацишĕн 32,5 иена тӳлемелли курс тăрăх, Госбанкран АКО облигацийĕсене туянма май пулать. Çав облигацисене хăйсен номинальнăй хакĕ тăрăх Дальрыба аренда тӳлевĕсене паушалированнăй налогсене, сборсемпе залогсене тӳленĕ çĕре йышăнать.

Анчах та, АКО облигацийĕсемшĕн тӳлемелли хака тивĕçлĕ, Нью-Йоркра тăракан ылттăн хакне тата иена курсне шута илсе хисепленĕ таса ылттăн, виçеллĕ хисепе АКО облигацийĕсемшĕн тӳлемелли куннчен пĕр кун малтан, ылттăнăн 1939 çулти апрелĕн пĕрремĕш тĕлне Нью-Йоркра пулнă хакне тата иена курсне шута илсе хисепленĕ, АКО облигацийĕсемшĕн тӳлемелли хака тивĕçлĕ таса ылттăнăн виçеллĕ хисепе çав Конвенци çумне хушса хунă документсен вăйне 1941 çула тăсасси çинчен çырнă Протокол çине çак числара алă пуснă май, Сире çакăн çинчен пĕлтеретĕп:

3. Арендăна панă договорсен срокĕсем 1940 çулта тухнă пулă тытмалли 410, 527, 529, 553, 557, 558 тата 1083-мĕш №-лĕ участоксене 1941 çулта торгине тăратмалла пулать.

4. Японин пулă промышленникĕсен, ССР Союзăн Лăпкă океан çыранĕсенчи пулă тытмалли участоксен арендаторĕсен, çавăн пекех тата консерва завочĕсене тата пулă тытма вĕсен çумне çирĕплетнĕ участоксене эксплоатацилеме ССР Союзĕн Правительствипе уйăрăм договорсем тунă Япони подданнăйĕсен 1941 çулта, халиччеенхи пекех, 100 тенкĕлĕх облигацишĕн 32,5 иена тӳлемелли курс тăрăх, Госбанкран АКО облигацийĕсене туянма май пулать. Çав облигацисене хăйсен номинальнăй хакĕ тăрăх Дальрыба аренда тӳлевĕсене паушалированнăй налогсене, сборсемпе залогсене тӳленĕ çĕре йышăнать.

Анчах та, АКО облигацийĕсемшĕн тӳлемелли хака тивĕçлĕ, Нью-Йоркра тăракан ылттăн хакне тата иена курсне шута илсе хисепленĕ таса ылттăн, виçеллĕ хисепе АКО облигацийĕсемшĕн тӳлемелли куннчен пĕр кун малтан, ылттăнăн 1939 çулти апрелĕн пĕрремĕшĕнче мĕнле пулнă, çавнашкалах юлмалла.

5. 1941 çулшăн аренда тӳлевне хывнă чухне, çавăн пекех тата арендăра тăракан пулă тытмалли участоксемшĕн, çаплах 1941 çулти торгире туянма пултаракан пулă тытмалли участоксемшĕн те паушалированнăй налогсемпе сборсене тӳленĕ чухне Японин пулă промышленникĕсем, ССР Союзĕн Лăпкă океан çыранĕсенчи пулă тытмалли участоксен арендаторĕсем, çавăн пекех тата консерва завочĕсене тата пулă тытма вĕсен çумне çирĕплетнĕ участоксене эксплоатацилеме ССР Союзĕн Правительствипе уйăрăм договорсем тунă Япони подданнăйĕсем кунсăр пуçне тата çӳлте асăннă тӳлевсен 20 процентĕ чухлĕ сумма тӳлеççĕ.

Çакăнпа усă курса, эпĕ Сире пысăк вырăна хурса хаклани çинчен çĕнĕрен ĕнентерсе калатăп.

СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. МОЛОТОВ.**

## Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов юлташ Японин Мускаври Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолне Татекава господина панă нота

**Мускав, 1941 çулти январĕн 20-мĕш**

Господин Посол.

Пулă тытасси çинчен Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Япони хушшинче 1928 çулти январĕн 23-мĕшĕнче туса алă пусса çирĕплетнĕ Конвенцин тата çав числарах алă пусса çирĕплетсе çав Конвенци çумне хушса хунă документсен вăйне 1941 çула тăсасси çинчен çырнă Протокол çине çак числара алă пуснă май, Сире çакăн çинчен пĕлтеретĕп:

1. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви 11, 12, 13, 14, 18, 19, 21, 22, 27, 28, 29, 30, 31, 32, 33, 34, 36, 37, 39, 42-мĕш №-лĕ консерва завочĕсене тата пулă тытма вĕсем çумне çирĕплетнĕ 104, 105, 106, 107, 108, 109, 110, 708, 742, 743, 757, 758, 766, 767, 775, 776, 782, 829, 830, 837, 838, 839, 842, 847, 948, 854, 855, 857, 858, 860, 861, 866, 867, 975, 980, 981, 984, 985, 986-мĕш №-лĕ участоксене Япони подданнăйĕсем эксплоатацилесси çинчен 1928 çулти ноябрĕн 3-мĕшĕнче тунă уйăрăм договорсен вăйне, вăл договорпа çыхăнса тăракан документсем тата кайран хушса тунă килĕшӳсен вăйне, халиччеенхи условисем тăрăх 1941 çулти декабрĕн 31-мĕшне çитиччен тăсма килĕшет.

2. Советăн Государство промышленноçĕн 1941 çулта лосось йăхне кĕрекен пулăсене халиччеенхи нормăпах тытмалла пулать, вăл шăпах 5 миллион пăт пулать.

3. Арендăна панă договорсен срокĕсем 1940 çулта тухнă пулă тытмалли участоксен арендаторĕсен, çавăн пекех тата консерва завочĕсене тата пулă тытма вĕсен çумне çирĕплетнĕ участоксене эксплоатацилеме ССР Союзĕн Правительствипе уйăрăм договорсем тунă Япони подданнăйĕсен 1941 çулта, халиччеенхи пекех, 100 тенкĕлĕх облигацишĕн 32,5 иена тӳлемелли курс тăрăх, Госбанкран АКО облигацийĕсене туянма май пулать. Çав облигацисене хăйсен номинальнăй хакĕ тăрăх Дальрыба аренда тӳлевĕсене паушалированнăй налогсене, сборсемпе залогсене тӳленĕ çĕре йышăнать.

Анчах та, АКО облигацийĕсемшĕн тӳлемелли хака тивĕçлĕ, Нью-Йоркра тăракан ылттăн хакне тата иена курсне шута илсе хисепленĕ таса ылттăн, виçеллĕ хисепе АКО облигацийĕсемшĕн тӳлемелли куннчен пĕр кун малтан, ылттăнăн 1939 çулти апрелĕн пĕрремĕшĕнче мĕнле пулнă, çавнашкалах юлмалла.

5. 1941 çулшăн аренда тӳлевне хывнă чухне, çавăн пекех тата арендăра тăракан пулă тытмалли участоксемшĕн, çаплах 1941 çулти торгире туянма пултаракан пулă тытмалли участоксемшĕн те паушалированнăй налогсемпе сборсене тӳленĕ чухне Японин пулă промышленникĕсем, ССР Союзĕн Лăпкă океан çыранĕсенчи пулă тытмалли участоксен арендаторĕсем, çавăн пекех тата консерва завочĕсене тата пулă тытма вĕсен çумне çирĕплетнĕ участоксене эксплоатацилеме ССР Союзĕн Правительствипе уйăрăм договорсем тунă Япони подданнăйĕсем кунсăр пуçне тата çӳлте асăннă тӳлевсен 20 процентĕ чухлĕ сумма тӳлеççĕ.

Çакăнпа усă курса, эпĕ Сире пысăк вырăна хурса хаклани çинчен çĕнĕрен ĕнентерсе калатăп.

СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. МОЛОТОВ.**

Ответлă нотăра Япони посолĕ г. Татекава çӳлерехре илсе кăтартнă нота содержанине сăмахран сăмаха çитиех тепĕр хут çырса панă тата ăна асра тытса тăма йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

## Парторганизаци—ăмăрту организаторĕ

ШАХАСАН. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз районра малта пыракан, çулсеренех пысăк тухăçлă тырпул туса тăрать. Колхозри пуçламĕш парторганизацине комсомол пуçламĕш организаци колхоза организацине хуçалăх енĕпе тĕреклетсе пырассишĕн, колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн кĕрешнине пула, Киров ячĕпе тăракан колхоз кашни çулах чаплă çитĕнӳсем тăвать, колхоз производствинчен пысăк тупăш илет. Иртнĕ çулта колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 16 центнер тĕштырă, сад-пахчаран 200 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Пуçламĕш парторганизаци коммунистсене тата комсомолецсене колхоз производствинче тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçсене аван туса пыраççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем тата коммунистсемпе комсомолецсем 1940 çулта тунă çитĕнӳсемпе лăпланмаççĕ. Вĕсем кăçал тĕштырă енĕпе те, социализмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн, колхозниксен пуян та культурăллă пурнăçĕшĕн кĕрешеççĕ. 1941 çулта колхоз гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес задача лартнă.

Кăçалхи вăйлă тырпулшăн тата йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Колхозниксем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнă куна тата суйлав кунне—февралĕн 16-мĕшне пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Çав кĕрешĕве пуçарса, ертсе пыраканĕ — пуçламĕш парторганизаци. Халĕ колхозра, бригадăсенче çуракине хатĕрленесси ăнăçлăн сарăлса пырать.

Вăйлă тырпул туса илес тесен сортлă вăрлăхсем, удобренисем ытларах хатĕрлемелле, ялхуçалăх машинисене вăхăтра юсамалла, çавăн пекех агротехникăна тĕплĕн вĕренмелле. Халĕ колхозра удобренисем хатĕрлесси йĕркеллĕ пулса пырать. Ку вăхăтчен тăвата пине яхăн лав торф, виçĕ пине яхăн лав тислĕк, вунă тонна фосфорит çăнăхĕ, çавнашкалах ытти удобренисене те чылай хатĕрленĕ. Бригадăсем хăйсене çирĕплетсе панă ялхуçалăх машинисене тата ытти инвентарьсене юсаса пĕтернĕ.

Колхозра стахановла шкул ĕçлет. Унта колхозниксем, коммунистсемпе комсомолецсем, пурĕ 70 çын агротехникăна вĕренеççĕ. Мĕн вĕреннине практикăллă ĕçпе çыхăнтараççĕ.

Киров ячĕпе тăракан колхоз 1941 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пырассишĕн Березовка, Тельман ячĕпе тăракан колхозсемпе социализмлă ăмăртăва тухрĕ.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те начар мар пулса пырать. Колхозăн сĕт-çу, сысна, сурăх, чăх-чĕп, кролик фермисем пур. Çав фермăсенче выльăхсем пурĕ 588 пуç шутланаççĕ. Иртнĕ çулсенче тунă показательсене шута илсе, Киров ячĕпе тăракан колхоза кăçал уçăлакан Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма кандидата тăратнă.

**В. ЯКОВЛЕВ.**

## Рабселькорсемпе стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕсем

ШАХАСАН. Январĕн 13-мĕшĕнче рабселькорсемпе стена хаçат редакторĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1940 çулти августăн 20-мĕшĕнче «Районри хаçатсем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа мĕнле кĕртсе пыни çинчен районри хаçат редакторĕ С. Соколов юлташ доклад туса пачĕ.

Соколов юлташ докладĕнчен те, тухса калакансен сăмахĕсем тăрăх та, ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕ тухнăранпа районри хаçат хăйĕн ĕçне чылай аванлатни палăрать. Авторсен коллективĕ икĕ хута яхăн ӳснĕ. Çавăнпа пĕрлех хаçата партипе совет, комсомол активĕ, хуçалăх ĕçĕнчи работниксем, совет интеллигенцийĕ, специалистсем çырма тытăннă. Активлă корреспондентсен хисепĕнче ВКП(б) членĕсемпе кандидатчĕсем—69 çын, комсомолецсем—79 çын, агрономсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, учительсем, врачсем, ялсовет, колхоз правлени председателĕсем, бригадирсем вуншарăн шутланаççĕ. Корреспондентсен хисепĕ 254 çынна çитнĕ. Çапла вара 5 уйăх хушшинче 124 корреспондент çĕнĕрен хутшăннă.

Çаксемпе пĕрлех районри хаçатăн çитменлĕхсем те пур-ха. Уйрăмăнах стена хаçат редакторĕсене пулăшса пырас тĕлĕшпе районри хаçат çителĕксĕр ĕçлет. Çавăн пекех, стена хаçат редакторĕсен заочнăй курсне ертсе пырасси те начар.

Чăнах та, районри хăшпĕр колхозсенчи стена хаçачĕсем аван тухса тăраççĕ. Сăмахран, Калиновкăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз районра пур енĕпе те малти вырăнта тăрать. Ку колхозри «КИМ» стена хаçачĕ те йĕркеллĕ тухать. Колхоза Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма кандидата тăратнă май «КИМ» стена хаçатне те выставка участникĕ пулма палăртнă. Çавăн пекех, Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозри стена хаçачĕ те выставка участникĕ пулма тивĕç илнĕ. Анчах районри чылай колхозсенче стена хаçачĕсем кăларас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. «Çамрăк колхозник», «Ударник» колхозсенче темиçе уйăх хушши ĕнтĕ стена хаçачĕ тухман.

Канашлу палăртнă çитменлĕхсене сийĕнчех пĕтерсе ĕçе лайăхрах организацилеме йышăнчĕ. Çавăнпа пĕрлех, районри хаçата корреспондентсене тата стена хаçат редакторĕсене пулăшса пыма, çавна май вĕсене час-часах канашлусене чĕнсе каласа хушса хăварчĕç.

### Вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Районри комсомолецсем çуракине хатĕрленес енĕпе пысăк пуçарулăх кăтартса ĕçлеççĕ. «Авангард» колхозри комсомол пуçламĕш организацийĕнчи комсомолецсем кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешĕве тухнă. Кунта комсомолецсенчен ятларах пĕр звено тунă. Комсомолецсем 4 гектар çине торф кăларнă. Вĕсем ытти удобренисене хатĕрлес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. **К. Митта.**

## 1941 çулти январĕн 20-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Япони хушшинче тунă килĕшӳсем пирки

Пулă тытасси çинчен 1928 çулта тунă Конвенцие 1941 çула тăсасси пирки ССР Союзĕпе Япони хушшинче тунă килĕшĕве паян хаçатра пичетлесе кăларатпăр, çав Конвенцие малтан 1936 çула, çавăн пекех 1937, 1938, 1939 тата 1940 çулсене тăснă пулнă.

Пулă тытмалли Конвенцие 1941 çула тăсасси çинчен килĕшӳ туса алă пусса çирĕплетни вăл — 1940 çулти ноябрь — декабрь уйăхĕсенче тата 1941 çулти январьте Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. Молотов юлташпа Япони посолĕ г. Татекава хушшинче пулса иртнĕ каласусен результатĕ пулса тăрать.

Пулă тытмалли Конвенцие 1941 çула тăсасси çинчен тунă килĕшӳре, 1940 çула тăсасси çинчен тунă килĕшӳпе танлаштарсан, çĕнĕ уйăрăм пункт пур, çав пункт тăрăх арендăшан тӳлекен сумма çумне 20 процент надбавка хушса тӳлемелле тунă, тата çав суммăна аренда сумми çумне хушса çеç мар тӳлеççĕ, тата Японин пулă промышленникĕсем хывакан паушалированнăй налогсемпе сборсен сумми çумне те хушса тӳлеççĕ. Кунта çакна асра тытас пулать: Японин пулă промышленникĕсем «Дальрыбăна» 1940 çулшăн арендăна панă участоксемшĕн çакăн хыççăн тухлĕ сумма хывнă аренда тӳлевĕ — 7 миллион та 4 пин те 615 тенкĕ, налогсемпе сборсем тăрăх паушальнăй тӳлев — 1 миллион та 961 пин те 292 тенкĕ. Пĕтĕмпе 8 миллион та 965 пин те 907 тенкĕ. Çак килĕшӳ тăрăх Японин пулă промышленникĕсен 1941 çулта арендăшăн тата налогсемпе сборсем тăрăх памалли паушальнăй тӳлевшĕн 1941 çулта тухакан тӳлевсен мĕнпур сумминчен 20 процент чухлĕ надбавка хывмалла.

Килĕшĕве ылттăн укçа çинчен калаçса татăлса алă пусса çирĕплетни—иена хакĕ йӳнелсе кайма пултарнă май Совет Союзĕ убытка тӳсмессине гарантилет, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Япони посолĕ г. Татекава патне янă нотăн 4-мĕш пунктĕнче çав ылттăн укçа çинчен тĕплĕн кăтартса панă.

Пулă тытмалли Конвенцие 1941 çула тăсасси çинчен тунă килĕшӳ, паллах, Совет Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисене лайăхлатас ĕçре малалла тепĕр утăм туни пулса тăрать.

## Пулă тытас енĕпе çĕнĕ Конвенци туса хатĕрлес тĕлĕшпе Совет Союзĕпе Япони хушшинче комисси организацилени çинчен

Хальхи вăхăтра СССР правительствипе Япони правительстви хушшинче икĕ енĕн представителĕсенчен комисси организацилесси çинчен килĕшсе татăлнă, çав комисси пулă тытас тĕлĕшпе тунă халиччеенхи Конвенци вырăнне — 1936 çулта срокĕ тухнă тата 1941 çула тăснă Конвенци вырăнне çĕнĕ Конвенци туса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлемелле.

СССР тата Япони представителĕсенчен тунă комисси çывăх вăхăтрах ĕçе тытăнать.

## Мацуо Докиярд фирми Совет Союзĕн Токиори Торгпредствине парăма кĕни çинчен тăракан ыйтăва йĕркелесе яни çинчен

Юлашки вăхăтра Совет Союзĕпе Япони хушшинче пулнă каласусем вăхăтĕнче Мацуо Докиярд фирми ССР Союзĕн Токиори Торгпредствине парăма кĕни çинчен тăракан ыйтăва тата йĕркелесе янă. Ĕç акă мĕнле пулнă.

1936 çулти сентябрĕн 18-мĕшĕнче ССР Союзĕн Торгпредствипе Мацуо Докиярд компанийĕ хушшинче виçĕ пароход тăвасси çинчен договор тунă пулнă, çав договорта: ăна пăссан договорта кăтартнă пĕтĕм суммăран 10 процент чухлĕ неустойка тӳлемелле, тесе кăтартса панă. Совет Торгпредстви хăй вăхăтĕнче Мацуо Докиярд фирмине 1 миллион та 647.750 иена чухлĕ аванс тӳленĕ. 1938 çулти мартăн 12-мĕшĕнче Торгпредствăна Мацуо Докиярд фирми хăй çав договора пăсасси çинчен пĕлтернĕ. Икĕ енĕ хушшинче тунă договорта аванса каялла тавăрса парасси тата неустойка тӳлесси çинчен каланине пăхмасăрах, фирма хăйĕнчен тухакан неустойкăна тӳлемен çеç те мар, тата аванса та каялла тавăрса паман.

Мацуо Докиярд фирми парăма кĕни çинчен тăракан ыйту тăрăх тунă çак килĕшӳ вăрăма тăсăлса кайнă çак ĕçе татса парать, кунпа пĕрлех калаçса татăлнă тăрăх фирма хăй илнĕ 1 миллион та 647.750 иена аванса тата 300 пин иена чухлĕ неустойкăна витмелли паушальнăй суммăна Торгпредствăна тӳлет. ССР Союзĕн Токиори Торгпредстви Мацуо Докиярд фирминчен çывăх кунсенчех 1 миллион та 647.750 иенăна илессине Япони правительстви гарантиленĕ. (ТАСС).

## Çамрăк коммунистсене пулăшмалла

ÇĔРПУ. Патăръелĕнчи ВКП(б) кандидачĕсен группи çамрăк. Ăна 1940 çулта организацилеленĕ. Малтанхи вăхăтра унта парти членĕ 1 тата парти членĕн кандидачĕсем 3 çын пулнă пулсан, халĕ парти членĕсем 2, кандидатсем 8. Коммунистсенчен иккĕшĕ колхоз председателĕ, иккĕшĕ—учитель, агроном пулса ĕçлеççĕ, ыттисем колхоз производствинче ĕçлеççĕ.

Производствăра ĕçлекен çамрăк коммунистсенчен хăшпĕрисем чăнах та хăйсен авангардлă рольне кăтартаççĕ. Павлов юлташа илер. Вăл Киров ячĕпе тăракан колхозра ĕçлет. Павлова колхоз председательне суйланăранпа колхоз чылай çитĕнӳсем турĕ, вăл ялсоветĕнчи ытти колхозсенчен пур ĕçсемпе те малта пырать. Колхозра сысна, ĕне, сурăх фермисем валли выльăхсем туянса çитернĕ. Халĕ колхоз чăх-чĕп ферми валли кайăк-кĕшĕксем туянас тата çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлет.

Кандидат группи уйрăм коммунистсене партпоручениесем парать. Анчах, хăшпĕр коммунистсем хăйсене панă поручениесене вăхăтра пурнăçласситĕн большевикла кĕрешмеççĕ-ха. И. Евдокимов, С. Павлов коммунистсем хăйсене панă поручениесене пурнăçласситĕн пăрăнса тăраççĕ. Акă, кандидат группи Евдокимов коммуниста ВКП(б) Обкомĕпе ВКП(б) райкомĕн юлашки пленумĕсен решенийĕсене колхозсенче епле пурнăçласа пынине тĕрĕслеме хушнă. Анчах çакна вăл пурнăçламан.

Парти членĕн кандидачĕсем И. Никифоров, С. Павлов юлташсем партиллĕ дисциплинăна пăсаççĕ, пухусене йĕркеллĕ çӳремеççĕ. 1940 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче пулнă партин уçă пухăвĕнчен Никифоров, С. Павлов юлташсем пăртак ларсанах тухса шăвăнчĕç.

Хăшпĕр кандидатсем члена куçма хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. С. Павлов, Г. Соснов, И. Евдокимов, П. Анисимов юлташсен парти членĕн кандидачĕн стажĕсем тахçанах тухнă ĕнтĕ, анчах вĕсем парти членне куçма хатĕрленсе çитмен. В. Иванов, И. Евдокимов коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерессишĕн тăрăшмаççĕ. Вĕсем халĕ те «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» 1-мĕш сыпăкне çеç вĕренеççĕ.

**Н. СЕРГ

# Машинăсене юсассине ҫапла ертсе пыраççĕ-и?

Машинно-тракторнăй станцийĕн тимĕрҫ лаççине пытăмăр. Икĕ тимĕрҫ, пĕр молотобоец тата тепĕр рабочи тимĕр кăмака тавра ăшăнса лараççĕ.

— Кăмăк ҫук пирки 65 кун хушши ĕнтĕ вали-шали ĕçлекелесе пурăнатпăр.

— Дирекци условипе туса паманнине пула иртнĕ уйăхра аран-аран 165 тенкĕ ĕçлесе илтĕм.

— Малалла та кун пекех пулсан, январь уйăхĕнче 50 тенкĕрен ытла ĕçлесе илейрес ҫук. Малашне те ĕҫ памастăр пулсан, ахаль лартиччен киле ярăр. Эпир хамăра валли хуть те ăҫта та ĕҫ тупма пултаратпăр...

Пĕрин хыççăн тепри ыйту параççĕ директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместительне Громов юлташа. МТ Станцийĕн дирекцийĕ вăй-питти çынсене ĕçсĕр лартса тарăхтарса ситернĕ. Ĕҫ ыйтаççĕ вĕсем. Ялхуҫалăх машинисене вăхăтра юсаса пĕтерме ĕмĕтленеççĕ. Анчах та дирекци вăхăтра кирлĕ чухлĕ кăмăк кӳрсе килсе паман. Тимĕрҫĕсен хастарланса ĕçлес ĕмĕтне татнă. «Кăмăк илме укҫа ҫук»—теççĕ дирекцинче ĕçлекенсем.

Чăн та, МТ Станцийĕ кирлĕ укҫасене вăхăтра илсе тăраймасть. Январĕн 1-мĕшне илсен 100 пин тенкĕ парăма кĕнĕ. Тивĕçлĕ укҫасене вăхăтра илме тăрăшмалла тата укҫа-тенкĕне тирпейлĕн тыткаламалла пулнă. Тимĕрҫĕсем каланă тăрăх, кăмăк илмелли укҫана тирпейсĕр тыткалани тата ытти ҫĕре расходланисем пулнă.

Трактор юсакансене болт, гайка е ытти пĕчĕк пайсем час-часах кирлĕ пулаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшне вырăнти тимĕрҫ лаççинчех туса хатĕрлеме пулать. Анчах та тимĕрҫĕсем кирлĕ запаслă пайсене хатĕрлесе параймаççĕ Кăмăк ҫуккине пула 67 плуг вырăнне 13 плуг ҫеç юсанă.

Ҫапла кунта тракторсемпе ытти тĕрлĕ ялхуҫалăх машинисене юсассине питех те начар организациленĕ. Ирт нĕ ҫулти тăваттăмĕш кварталтах 26 трактор юсаса кăлармалла пулнă. Январĕн 15-мĕшне ҫитсе 18 трактор кăна юсанă. Ҫак шутран 10 трактора ĕçлеттерсе пăхман-ха. Ҫапла ĕнтĕ вĕсене ремонтран тухнă теме ҫук.

— Громов юлташ, чăтса тăма ҫук, ура шăнса татăлса ӳкет пулĕ,—тет трактор пайĕсене вырнаҫтарса тăракан пĕр тракторист. Кун пек сăмахсене час-часах илтме пулать кунта. Хутма вутă ҫук. Мастерскойĕнче те, общежитинче те, МТС конторинче те питĕ сивĕ пулать. Шартлама сивĕ кунсенчен пĕринче контора ҫуртне пачах та вутă хутман пулнă. Ҫакна пула трактористсен курсĕнче вĕренекенсем 3 сехет хушши вĕренмесĕр ларнă.

Дирекци трактористсене тухăҫлă ĕçлеме услови туса паман.

— Вĕретнĕ шыв сайра-хутра ҫеç пулать, ҫителĕклĕ мар ҫав,—тет Громов юлташ. Тĕрĕссипе каласан, вĕретнĕ шыв нихăҫан та пулмасть кунта. Трактористсен ĕçлесе ăш хыпнă хыççăн сивĕ шыв ĕçме тивет. Столовăй уҫасси пирки нумайранпа калаҫаççĕ, анчах та паян куна ҫитсе столовăй та, буфет та çук.

Культурăлă-массăллă ĕçе тивĕçлипе организацилемен. МТС ĕçлекенсене хаçат-журналсем вуласа памаççĕ. Докладсемпе калаҫусем ирттермеççĕ. Техникăна вĕренмелли кружок ĕçне тивĕçлипе йĕркелемен.

Трактористсем пурăнакан общежитинче йĕркелĕх çук. Йывăç татăкĕсенчен кровать пеккисем туса лартнă. Вĕсем çине саваласа якатман тата таса мар хăмасем хурса тухнă. Çак «кроватьсем» çинче тӳшек пичĕсем выртаççĕ. Вĕсене улăмпа та пулин тултарман. Çытарсем çук. Урайсем нихăçан та шыв курман пулĕ. Паллах, кунта трактористсем кирлĕ пек канма пултараймаççĕ.

МТ Станцийĕнчи пуҫламĕш парторганизацин çак çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмалла пулнă. Парти организацийĕ трактормпе ытти тĕрлĕ ялхуҫалăх машинисене юсас ыйтăва сӳтсе-явман теме çук. Ку ыйтăва малтанхи хут 1940 çулти октябрĕн 15-мĕшĕнче пулнă пухура сӳтсе-явнă. Директор Ельмаков юлташа кирлĕ чухлĕ вутă, бензин, кăмăк, ялхуҫалăх машинисемпе запаслă пайĕсене хатĕрлеме хушса хăварнă. Ельмаков юлташ çак решение пурнăҫа кĕртнĕ-и-ха? Ытти коммунистсем хăйсен обязанноҫĕсене пурнăҫласа пыраççĕ-и? Парторганизацин пуху решенине уйрăм коммунистсем пурнăҫа кĕртсе пынине вăхăтра тĕрĕслесе тăмасть.

Икĕ уйăх ҫурă иртнĕ хыççăн коммунистсен тепĕр пухăвĕ пулать. Кунта общественниксен организацисен ĕçĕ çинчен завком председателĕн Коночкин юлташăн докладне итлеççĕ. Трактористсемпе юсасси мĕнле пыни çинчен сăмах май çеç асăнаççĕ. Ку пухура коммунист Ельмаков юлташ пуху решенине мĕнле пурнăҫлани çинчен отчет итлемелле пулнă. Пуху массăллă-ăнлантăруллă ĕç çинчен асăннă май «машинно-тракторнăй мастерскойра тата конторăра ĕçлекенсем хушшинче ирхине ҫĕ пуҫланас умĕн е кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче хаçат-журналсем вуламалла тăвас»,—тесе йышăнать. Анчах ҫав решенине паянхи куна çитсе те пурнăҫа кĕртме тытăнман.

Парти организацийĕ МТС хуҫалăхне çирĕп йĕркене кĕртме тăрăшмасть. Плугсем, сеялкăсем, молотилкăсем ăҫта кирлĕ унта юр айĕнче сапаланса выртаççĕ. Вĕсене пĕр ҫĕре, юр ытлах вĕҫтермен вырăна та пулин пухса лартман. Коммунистсен 1940 çулти декабрĕн 29-мĕшĕнче пулнă пухăвĕнче колхозсенчен çак вăхăта çитсе те илсе килмен тракторсемпе ытти тĕрлĕ ялхуҫалăх машинисене январĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр МТС территорине илсе килме решени йышăннă. Çак сĕнĕве те пурнăҫа кĕртмен. 9 трактор тата ытти машинăсем паян кунченех колхозсенче сапаланса выртаççĕ. Çак шутран 6 тракторне юсамалла. Тракторсемпе плугсене çураки пуҫланас умĕн ҫеç участоксене илсе тухмалла. Апла пулин те Черняев бригади юсанă 3 трактора халех колхоза илсе кайса лартнă.

МТ Станцийĕ асăннă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме пултарать. Трактористсемпе механиксен тата тимĕрҫĕсен ĕçри хастарлăх пысăк. Вĕсен паха пуҫарăвĕсене шута илмелле. Парти организацийĕн директи ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмалла. Тракторсемпе ялхуҫалăх машинисене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсаса ҫитерес ĕçе организацилемелле, ăна ертсе пымалла.

**Ҫĕрпӳ. (Хамăр корр.).**

## Черепица мастерскойĕ

Сĕнтĕр районĕнче тăватă ҫул хушши ĕнтĕ черепица туса кăларакан мастерской ĕçлет. Иртнĕ ҫулта 110 пин черепица туса кăларнă.

Кăҫал 120 пин черепица туса кăлармалла. Кунта мастерской коллективĕ тăрăшса ĕçлет. Партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хуттăнса, пĕрремĕш квартал планне конференци уҫăличчен 90 процент тултарма йышăннă. Мастерскойра ĕçлекенсем пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

Тăрăшса ĕçленипе черепица туса кăларассине кварталтан квартала, уйăхран уйăха тултарса пыраççĕ. Халĕ Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем çĕнĕрен тунă витесем, ҫуртсем çине черепицăпа витеççĕ. Юнгăри Войков ячĕпе тăракан колхоз çак мастерскойран черепицăсем илсе пĕр вите, сарай тата складсен çийĕсене черепицăпа витнĕ. Çавăн пекех ку колхозри 20 хуҫалăх хăйсен ҫуртĕрĕсем çине черепицăпа витнĕ. Ку, пĕр енчен, питĕ йӳне ларать, тепĕр енчен, вуткăвартан та хăрушă мар.

Анчах та черепица мастерскойне хăшпĕр чухне чăрмантарса пыраканнисем те пур. Райлесзаг ку таринччене вутă ҫителĕклĕ парса тăмасть. Иртнĕ уйăхра вутă вăхăтра паман пирки 2 кун вутăсăр ларма тивнĕ. Районри финанс пайĕ те укҫа вăхăтра парса пымасть.

Çаксене пурне те райсовет исполкомĕ (унăн председателĕ Угольников юлташ) пĕлсе тăрать, анчах нимĕнле мерăсем те йышăнман. Черепица мастерскойне районри руководительсем пырса каляççĕ, ĕçре пулăшмаççĕ.

**Пр. ЯРГУНЬКИН.**

Кăҫалхи январĕн 4-мĕшĕнче ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ РСФС Республикипе Чăваш АСС Республикин хисеплĕ званийĕсене панă çынсене грамотăсем пачĕ. **Унерчĕк çинче:** грамота илнĕ юлташсем (сулахайран сылтăмалла): РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ П. С. Кафтанников, РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕ А. И. Ананьев, Чăваш АССР шкулăн тава тивĕçлĕ учителĕ А. В. Карасев, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ И. М. Кузнецов.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

## Апат-çимĕç промышленность ĕçĕн хăшпĕр итогĕсем

Пирĕн республикăри апат-çимĕç промышленноҫĕн 1939 çул пуҫламĕшĕнче тăватă предприяти пулнă: Канашри премĕк фабрики, Çĕмĕрлери квас мастерскойĕ, Хĕрлĕ Чутайри тата Кĕтеснерти (Вăрмар р.) варени, повидла, постила таврашсем хатĕрлекен заводсем.

ВКП(б) XVIII съезчĕн решенийĕсене пурнăҫа кĕртсе пынă май, Апат-çимĕç промышленноҫĕн Халăх Комиссариачĕ тата уйрăм райсовет исполкомĕсем районри промышленноҫа аталантарса пыраççине чылай вăйлатрĕç. 1939 çулта татах тепĕр виçĕ предприяти ĕçе янă: Çĕрпӳ тата Сĕнтĕрвăрри хулисенчи апат-çимĕç комбиначĕсем, Канаш хулинчи квас тăвакан мастерской.

1940 çулта районри промышленность предприятийĕсен шучĕ татах та ӳсрĕ. Вăл ҫул 9 предприяти туса пĕтерсе ĕçе янă: Элĕк районĕнчи Куракăш ялĕнче апат-çимĕç комбиначĕ уҫăлнă. Унта пахча-çимĕҫсене, çырла таврашсене типĕтеççĕ, брага, сăра, квас тăваççĕ. Шăхасанта квас тăвакан мастерской, Çĕмĕрле хулинче тата Куславкка поселокĕнче конфетсем тăвакан мастерскойсем, Шупашкарта тата Кувакинора варени пĕçерекен заводсем, Нурăсра (Советский р.) районри апат-çимĕç комбиначĕ (варенисем тата ĕçмелли тутлă шывсем тăвакан комбинат), Кудель ялĕнче (Пăрачкав р.) крахмал завочĕ тата Октябрьский районра квас мастерскойĕ уҫнă. Халĕ ĕнтĕ пирĕн республикăра апат-çимĕç хатĕрлекен предприятисем 16 шутланаççĕ.

Республикăри апат-çимĕç промышленноҫĕ продукци кăлармалли çулталăк планне 1940 çулти ноябрĕн 1-мĕш тĕлнех 105,8 процент тултарнă. Ҫапла вара апат-çимĕç промышленноҫĕ иртнĕ çулта планран ирттерсе 424,7 пин тенкĕлĕх продукци панă.

Апат-çимĕç промышленноҫĕн ӳсĕмне уйрăмăнах çак цифрăсем пит аван кăтартса параççĕ. Наркомпищепром предприятийĕсем 1939 çулта 558,8 пин тенкĕлĕх продукци кăларнă пулсан, 1940 çулта пĕр IV-мĕш кварталта кăна 568,5 пин тенкĕлĕх продукци кăларнă.

1940 çулта районри апат-çимĕç промышленноҫĕ продукци ассортиментне пуянлатрĕ: конфетсем, карамельсем, пирожнăйсем, тортсем т. ыт. те туса кăларма тытăннă.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче кăларнă Указ ĕç тухăçлăхне хăвартма пысăккăн пулăшрĕ. Çак Указ тухнă хыççăн ĕç дисциплини нумай лайăхланчĕ, ĕç тухăçлăхĕ хăпарчĕ. Ун çинчен çак цифрăсем аван кăтартса параççĕ.

Канашри конфетсем тăвакан фабрикăра июнь уйăхĕнче пĕр рабочи 1052 тенкĕлĕх продукци кăларнă пулсан, июль уйăхĕнче—1453 тенкĕлĕх, декабрь уйăхĕнче—2358 тенкĕлĕх продукци кăларнă. Урăхла каласан, пĕр рабочи кăларакан продукци икĕ хут ытла ӳснĕ.

Çĕмĕрлери конфетсем туса кăларакан мастерскойра пĕр рабочи туса кăларакан продукци июнь уйăхĕнче 1790 тенкĕлĕх шутланнă пулсан, июль уйăхĕнче пĕр рабочи 1992 тенкĕлĕх продукци кăларнă.

Районри предприятисенче стахановла движени сарăлса пырать. Канашри конфет тăвакан фабрикăри пирожнăй цех мастерĕ Никитина тата конфет тăвакан цехри мастер Антонова, Çĕмĕрлери квас тăвакан заводри мастер Андреев юлташсем т. ыт. те хăйсен нормисене яланах ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен, ĕç кунĕнчи 480 минутăпа туллин усă куракан рабочисемпе пĕрлех, ĕç çине тӳнтерле пăхакан çынсем те пур-ха. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕн завхозĕ Долгов, Шупашкарти плодоваречнăй заводри мастер Лопатин, Çĕрпӳри апат-çимĕç комбиначĕн бригадирĕ Владимиров ним сăлтавсăрах прогулсем тунă. Вĕсене совет судĕ тивĕçлипе айăпланă.

Апат-çимĕç промышленноҫĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл—предприятисенче санитари культури тивĕçлĕ вырăнта тăманни. Уйрăм предприятисенче: Сĕнтĕрвăрринчи, Çĕрпӳри апат-çимĕç комбиначĕсенче, Калининори тата Шăхасанти квас тăвакан мастерскойсенче тата ытти предприятисенче те цехсенче ĕç вырăнĕсене таса тытассишĕн кĕрешмеççĕ.

Иккĕмĕш пысăк çитменлĕх вăл — учет ĕçне кирлĕ пек йĕркелемменни. Сĕнтĕрвăрринчи апат-çимĕç комбинатĕнче (директорĕ Чернов юлташ) сахăра ытлашши расходланă. Чĕртавара ытлашши расходлани Çĕрпӳри апат-çимĕç комбинатĕнче, Канашри тата Çĕмĕрлери конфет тăвакан фабрикăсенче те пулнă.

Виççĕмĕш çитменлĕх — заданисене пур ассортиментсем тăрăх та тултарса пыманни. Элĕкри апат-çимĕç комбиначĕ пахча-çимĕҫĕсемпе сад-пахчи çимĕҫĕсене типĕтсе хатĕрлес плана мĕнпурĕ те 6 процент ҫеç тултарнă.

Уйрăм райсоветсен исполкомĕсем хăйсен районĕнчи апат-çимĕç предприятисен ĕçĕсемпе пĕртте интереслемеççĕ. Предприяти директорĕсен отчечĕсене райсовет исполкомĕн ларăвĕсенче итлемеççĕ, ĕçре пулăшса пымаççĕ.

Шăхасан райсовет исполкомĕ квас мастерскойĕн директорне çулталăк хушшинче пиллĕк хут улăштарнă. Паллах ĕнтĕ, кун пек «ĕçлесен» производствăна йĕркелесе яма хĕн.

Апат-çимĕç предприятисенчи çитменлĕхсене пĕтересси, вĕсен ĕçне тивĕçлипе йĕркелесе ярса, пур предприятисем тăрăх та 1941 çулти плана кашни уйăхрах тултарса пырасси, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти январĕн 11-мĕшĕнче «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермеллĕ мероприятисем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх районсенче апат-çимĕç промышленноҫĕ енĕпе çĕнĕрен предприятисем тăвас ĕçе вăйлатса пырасси—Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн тата райсовет исполкомĕсен ответлă задачи пулса тăрать.

**П. ИГНАТЬЕВ.**

# Хатĕрлев ĕçĕнчи работниксен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта Заготовкăсен Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсен тата ялхуҫалăх продуктисем хатĕрлес енĕпе ĕçлекен организацисен руководителĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлу государствăна обязательнăй йĕркепе тырпулсем, аш-какай, сĕт-çу тата ытти ялхуҫалăх продуктисем тăратас ĕçсене иртнĕ ҫулта мĕнле пурнăҫлани тата 1941 çулта хатĕрлев организацисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-яврĕ.

Хатĕрлев организацисем иртнĕ ҫулта чылай пысăк çитĕнӳсем тунипе пĕрлех, ялхуҫалăх продуктисем хатĕрлес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Заготзерно руководителĕсем тата Заготовкăсен Наркомачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсем çителĕксĕр ĕçлесе пынипе государствăна тырпулсем тăратас плана 99,3 процент кăна пурнăҫланă.

Государствăна тырпулсем тăратасси уйрăмăнах единоличниксем хушшинче юлса пырать. Вĕсем тырпул тата ытти ялхуҫалăх продуктисем парас плана ҫулсеренех пурнăҫласа пыман. Иртнĕ ҫулхи парăмсене единоличниксенчен шыраса илессишĕн хатĕрлев организацисем ытла та начар ĕçлесе пынă. Çакăн пирки ĕнтĕ 1940 çулта единоличниксем тырпул тăратас плана пурнăҫламан. Тырпул тăратас ĕçре хăшпĕр районсем калама çук япăх ĕçлесе пыраççĕ. Вăрмар, Кувакино, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Çĕмĕрле районĕсем плана 50-шар процент кăна пурнăҫланă. Октябрьский район вара плана 38 процент ҫеç тултарнă.

Çак районсем государствăна тырпул тăратас ĕçре чăрмантарса пыракан единоличниксем хушшинче кирлĕ пек ĕçлемен. Тырпул парса татман хуҫалăхсенчен шыраса илме тăрăшман. Çакăн пирки единоличниксем государствăна памалли тырпулсене ик-виçшер ҫулăн парса татман.

Хăшпĕр районсенче единоличниксен кил вырăн участокĕ çинче туса илнĕ шутран государствăна памалли тырпулсене хисепе илмесĕр хăварнă. Льготăсене те тĕрĕс паман.

МТ Станцисене ĕçленĕшĕн натуроплата парас ĕç те ҫителĕксĕр пырать. Заготовкăсен Наркомачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсем ку ĕçе пĕтĕмпех МТ Станцисем тăвасса шаннă. Çакăн пирки Елчĕк районĕ—225 тонна, Çĕрпӳ—145 тонна, Советский—155 тонна, Куславкка—105 тонна парса татман.

Çавăн пекех ытти ялхуҫалăх продуктисене хатĕрлесси те юлса пырать. Колхозсем хăйсен обязательствисене вăхăтра тата ытлашшипех тултарса параççĕ. Вĕсем аш-какай планне 105 процент, пахча-çимĕҫсем, сĕт-çу планĕсене те ытлашшипех тултарнă. Анчах единоличниксем пур парăмсене те йĕркеллĕ тултарса пымаççĕ. Республика тăрăх единоличниксем ҫĕрулми тăратас плана 46 процент, аш-какай, сĕт-çу планĕсене ҫуррине яхăн кăна пурнăҫланă.

Аш-какай тăратас ĕçре Октябрьский, Чкаловский, Куславкка, Комсомольский районĕсем юлса пыраççĕ.

Хăшпĕр районсем пахча-çимĕҫсем хатĕрлес плана тултарман. Ку тĕлĕшпе Канаш, Кувакино, Пăрачкав районĕсене кăтартас пулать. Вĕсем ҫĕрулми тăратас плана ҫулсеренех тултарса пымаççĕ. Республикăна хатĕрлев ĕçĕнче чăрмантарса пыраççĕ.

Канашлу хатĕрлев организацисен ĕçĕнчи ҫитменлĕхсене тĕплĕн тишкерсе тухрĕ. Государство умĕнчи парăмсене тултарассишĕн хатĕрлев организацисен ялсоветсем ҫумĕнчи комиссиесемпе, ялти активпа таччăн ҫыхăнса ĕçлемелле. Партин XVIII конференцине государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмпех тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешмелле.

# Апат-çимĕç продуктисем туса кăларас ĕçе малалла ӳстерсе пымалла

Апат-çимĕç пĕçерсе сутакан предприятисем ҫумĕнче подсобнăй хуҫалăхсем туса сыснасене тăрантарса самăртасси пит те кирлĕ ĕç пулса тăрать. Çакăн пек туни апат-çимĕç продуктисене питех те нумай туса кăларма май парать. Апат-çимĕҫсен хакне йӳнетме, çавăн пекех вĕсен пахалăхне лайăхлатма та нумай пулăшать.

Столовăйсем тата ресторансем ҫумĕнче подсобнăй хуҫалăхсем тума, сыснасем илсе тăрантарса самăртма условисем ҫителĕклĕ. Столовăйсенче пĕçернĕ апат-çимĕҫсен юлашкисем т. ыт. одходсем те нумай. Сыснасене ҫитерме урăх апат-çимĕҫсем илме те кирлĕ мар. Анчах столовăйсен руководителĕсем подсобнăй хуҫалăхсене анлăлатма, отходсемпе кирлĕ пек усă курма пултарайман. Вĕсем ытлашши юлакан апат-çимĕҫсем усăсăрах сая кайнине те шута илмеççĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи столовăйра ĕçлекен официанткăсенчен пĕри столовăй отхочĕсемпе усă курнă. Вăл çак отходсене ҫитерсе икĕ сысна пăхса ҫитĕнтернĕ. Кун пек официанткăсем ытти хăшпĕр столовăйсенче те пур.

Столовăйсен руководителĕсем хăйсен работникĕсем апат-çимĕç отхочĕсемпе пысăккăн усă курнине аванах пĕлеççĕ. Столовăйра хăйсем аш-какай ҫителĕксĕр пулнине е базарта хаклă хакпа илсе апат-çимĕç хакĕсем ӳснине час-часах кураççĕ. Ĕçсыннисем те сыснасем илсе усрама, вĕсене лайăх пăхса самăртса йӳнĕ аш-какай тума кирлине кăтартса параççĕ. Çак паха сĕнӳсене райсоюзра ĕçлекенсем те, столовăйсен руководителĕсем те хаклаççĕ.

Чăвашсоюз çирĕплетнĕ план тăрăх, 1940 çул хушшинче столовăйсенче пурĕ 800 пуҫ сысна илсе усрамалла пулнă. Çак плана ытла та начар пурнăҫласа пынă. Столовăйсем усракан сыснасен хисепĕ 1940 çулти октябрĕн 1-мĕшне 499 пуҫ кăна пулнă.

Комсомольский, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпӳ, Шăмăршă райсоюзĕсем вырăнта аш-какай хатĕрлессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем сыснасем чылай усраççĕ. Сыснасене лайăх пăхса усраса апат хакне те нумай йӳнетнĕ.

Уйрăмăнах Улатăр районĕ ҫителĕксĕр ĕçлесе пырать. Кунта пĕр сысна та усрамаççĕ. Çавăн пекех ячĕшĕн çеç ĕçлекенсем те пур. Мĕншĕн сысна усрамастăр тесе каласран Кувакино райсоюзĕ пĕр сысна, Советский — 2, Тăвай — 3, Чкаловский — 5 сысна кăна усраççĕ. Паллах, вĕсем çакăн пек ĕçленипе хăйсене сиен кăна кӳреççĕ.

Кашни столовăйăн е ресторансен те сыснасем усрама тытăнмалла. Вырăнта продовольстви хатĕрлемелле, апат-çимĕҫсен пахалăхне лайăхлатмалла.

**А. С.**

## Колхозсене тӳлемелли парăмсене вăхăтра парса татмаççĕ

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «Уборка тата ялхуҫалăх продуктисен заготовкисем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, колхозсем, хăйсен государство умĕнчи мĕнпур обязательствисене тултарнă хыççăн тата фондсем тунă хыççăн тупăшсене валеҫме тытăнмалла. Республикăри колхозсем çак ответлă та пысăк ĕçе пурнăҫа кĕртме тытăнчĕç.

Тырпул тата укҫа-тенкĕ тупăшĕсене валеҫме хатĕрленсе пынă май колхозсенче ĕçкунĕсене тĕплĕн шутласа тата вĕсене тĕрĕс çырнине тĕрĕслесе тухрĕç. Анчах хатĕрлев организацисемпе ытти учрежденисем колхозсене тырпул тата ытти тупăшсене, уйрăмăнах ĕçкунĕсем тăрăх укҫа-тенкĕ валеҫме чăрмантараççĕ. Вĕсем колхозсене памалли укҫана нумай вăхăт хушши тӳлемесĕр тăраççĕ. Çакă вăл колхозсенче тупăшсене вăхăтра валеҫес ĕçре пысăк чăрмав пулса тăрать.

Государство банкĕн Чăваш республикинчи конторисем нумай организацисемпе учрежденисем колхозсене памалли укҫа-тенкĕне тӳлесе татманнине тупнă. Иртнĕ ҫулхи декабрĕн 1-мĕшне шутланă тăрăх, хатĕрлев организацисен колхозсене çĕршер пин тенкĕ тӳлемелле пулнă. Çак шутран «Союзплодоовощтара» Чăваш республикинчи конторин—612 пин тенкĕ, «Хмельсоюз»—512 пин тенкĕ, «Селхозснаб»—108 пин тенкĕ тата «Тароплодоовощтрест» конторин 827 пин тенкĕ тӳлемелле. Асăннă организацисем колхозсене тӳлемелли укҫана нумай вăхăт хушши тавăрса памасăр тăраççĕ. Çавăн пекех ытти организацисем те парăмсене вăхăтра парса татассишĕн кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Парăмсене тӳлесси çине сӳреккĕн пăхнă пирки «Госсортфонд»—66 пин тенкĕ, «Заготскот» 21 пин тенкĕ тата «Заготзерно» конторисем—24 пин тенкĕ колхозсене тӳлемен.

Уйрăмăнах «Заготзерно» конторисем тата унăн районсенчи пункчĕсем колхозсене тӳлемелли укҫа-тенкĕ парăмсене парса татассишĕн тăрăшмаççĕ. Вĕсем государствăна тăратнă тырпулсемшĕн памалли укҫана çак тарана çитсе те тӳлесе татман. Ку тĕлĕшпе Çĕрпӳ, Канаш, Йĕкреç районĕсенчи пунктсем ытла та начар ĕçлеççĕ. Иртнĕ ҫулта тырпулсем тăратас ĕçе ăнăçлăн вĕçленĕ пулсан та, çав тырпулсемшĕн тӳлемелли укҫана парса татманни пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

«Заготзерно» пункчĕсем ытти парăмсене те вăхăтра тӳлемеççĕ. Шупашкар районĕнчи пунктăн пурĕ 792 пин тенкĕ, Улатăр—380 пин те 800 тенкĕ, Канаш—231 пин тенкĕ, Тĕрлемес—217 пин те 800 тенкĕ, Йĕпреç—182 пин тенкĕ тӳлемелле. Çакăн пек пысăк парăм шутланать пулсан та, вĕсем урăх организацисен укҫипе хăйсем укҫи пекех усă кураççĕ.

Колхозсем «Заготзерно» пункчĕсене пысăк пахалăхлă вăрлăхсем панă. Çаксăнăн унăн колхозсене 66 пин тенкĕлĕх тĕрлĕ тырпулсем каялла тавăрса памалла. Анчах вĕсем «нарядсем» килмен тесе ĕçе вăхăтра лурнăҫласа пымаççĕ. Кунсăр пуçне колхозсем государствăран илнĕ вăрлăхсене каялла тавăрса парасси те юлса пырать.

Организацисемпе учрежденисене хуҫалăх расчечĕ çине куҫарасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хуҫалăх расчечĕ çине куçнă нумай организацисем хăйсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетрĕç. Укҫа-тенкĕ енчен те çирĕпленчĕç. Вĕсем 1940 çулти III-мĕш кварталта кăна республика тăрăх 1.964.300 тенкĕ экономи пачĕç.

«Заготзерно» пункчĕсен те лайăхрах ĕçлеме условисем пулнă. Вĕсене те 1940 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласах хуҫалăх расчечĕ çине куҫарма хушнă. Анчах вĕсем хăйсем умĕнче тăракан ĕçсеммĕн ответсăр пулнă. Хуҫалăх расчечĕ çине кая юлса куçнă.

Маслопромпа Заготскот конторисем те парăмсене вăхăтра парса татмаççĕ. Маслопром сĕт-çу панăшăн 55 пин тенкĕ тӳлемен. Çавăн пекех Заготскот конторисем те аш-какай панăшăн колхозниксене 21 пин тенкĕ парса татман.

Колхозсемпе расчет тăвассине лайăхлатма вăхăт ĕнтĕ. Колхозсене тӳлемелли мĕнпур парăмсене халех парса татмалла.

**Д. РУБЛЕВ.**

Государство банкĕн Чăваш республикинчи конторин старший инспекторĕ.

# Вырăнти промышленноҫа анлăрах сарар

СССР Совнаркомĕ тата ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлени куллен кирлĕ таварсем тăвас ĕçе лайăхлатмашкăн условисем туса парать. Вăл чĕртаварсемпе, отходсемпе тирпейлĕ усă курма, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетме пысăк майсем туса парать. Çак постановлении кашни сăмахĕнче, кашни йĕркинче ĕççынисен интересĕшĕн сталинла тăрăшни сисĕнет. Постановлени вырăнти промышленность валли тата промысла кооперацийĕ валли аталанса пыма пит те пысăк майсем туса парать.

Пурте пĕлеççĕ, Шупашкарти сутуилӳ организацийĕсем куллен кирлĕ хăшпĕр таварсене Крымран, Уралран т. ыт. çĕртен те кӳрсе килнĕ. Акă фактсем: ачасен кровачĕсене Одесса хулинчен, ухватсене, турчкасене, хĕскĕчсене т. ыт. те Уралран, йывăçран тунă чашăка Мускавран кӳрсе тăнă. Хулари магазинсенче кĕпе вăлашкисем, пуртă авриссем, йывăç кĕреçесем тупса илме çук.

«Кожупряжь» артель лаша кӳлмелли хатĕрсем тăвать пулсан та, пĕчĕк япаласенех, кунта, хамăр патăртах тума май килекен чылай япаласенех, таçтан инçетрен кӳрсе килеççĕ. Ĕнерчĕк тимрисене, сӳсмен клещийĕсене Ярославль хулинчен илсе килеççĕ. Çав вăхăтрах Чăваштпромсоюзăн «Металлист», «Авторемонт» тата хулари артельсенче çак япаласене кирлĕ таранах тума май пулнă.

Вырăнти промышленноҫа организацилес тата планлас ĕçе исполкомсене панă. Çак тĕлĕшпе тумалли ĕçсем вырăнти Советсем умĕнче питех те анлă.

Иртнĕ çулсенче вырăнти промышленность ĕçне планлас ĕçе хула Совечĕсен, райсоветсен исполкомĕсем хуттăнсах кайман. Планлас ĕçе ячĕшĕн кăна, бюрократла меслетсемпе ирттернĕ. Мĕнрен килет-ха çакăн пек тĕслĕх? Шупашкар хулинче, Леспромартель пур çĕртех, тикĕт тăвакан завод тата тикĕт тума 15 тонна таран чĕртавар пур çĕртех, 1940 çулта тикĕт 4 тонна кăларма пултарнă пулсан та, Чăвашдревпромсоюз 1941 çулта мĕнпурĕ те пĕр тонна кăна тикĕт тума палăртса хунă.

Е тата таканасем туса кăларас ĕçех илер. Чăвашдревпромсоюз 1941 çулта мĕнпурĕ те 100 такана кăна туса кăларма планласа хунă. Кăна пĕр рабочи пĕр уйăхра туса пĕтерме пултарать. Таканасем ытларах туса кăларма йывăç çук-и? Е таканасем сутăн илес текенсем тупăнмĕç-и? Йывăç та нумай, илес текенсем те пур, ĕçлес килни кăна çитмест иккен. «Красный мебельщик» артель çунашкасем, йывăç чашăк-тирĕксем тума пултарать пулсан та, вĕсене кăçал планра палăртман-ха.

Чăваштшвейпромсоюзăн Ленин ячĕпе тăракан артелĕ 1940 çулта тумтирсене сăрлакан тата химилле майсемпе тасатакан мастерскойĕ тăрăх 41.500 тенкĕлĕх продукци кăларнă. Ҫапла пулин те 1941 çул валли çак ĕçе Чăваштшвейпромсоюз 20 пин тенкĕлĕх кăна планласа хунă. Малалла аталантарса пырас вырăнне чакарса, кирлĕ ĕçе сӳтерсе пыраççĕ. Мĕне юрăхлă вăл?

Шупашкар хулинче ку таринччен те тушкăсем пĕçерес ĕçе йĕркелемен. Çак çитменлĕхсене малашне текех тӳсме юрамасть. СССР Совнаркомĕ тата ЦК ВКП(б) 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановлени çакăн пек çитменлĕхсене пурне те хăвăрт пĕтерме хушать.

Тепĕр енчен, çак постановлени вырăнти Советсем çине ку тĕлĕшпе пуçаруллă ĕçлеме пысăк ответлăхсем хурать. Вырăнти Советсен, вырăнти промышленность ĕçне организацилесе пынă вăхăтрах, сысна самăрлатмалли пунктсем тăвассине, чăх-чĕп тата хуркăвакал ĕрчетессине, пулă тытассине, охота ĕçне, йывăç улмисем, çырласем, кăмпасем пухассине, сад-пахчисем тата хурт-хăмăр ĕрчетессине йĕркелесе пымалла. Вĕсенчен куллен кирлĕ çимĕҫсем туса кăларма пулать.

Çак ĕçсене тума пирĕн мĕн кирли пурте ҫителĕклĕ. Столовăйсенче, ача яслисенче, предприятисенче выльăхчĕрлĕхе ҫитер

# Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: ĕнер Англи çинче, Оркнейски утравсем патне çитиччен, разведкăллă вĕçевсем тунă чухне Германи авиацийĕ вăрçă тĕлĕнчен паллă пулса тăракан объектсем çине бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă. Кунсăр пуçне, противник суднисене атакăланă, вĕсенчен иккĕшне сиенленĕ. Ĕнер противникăн пĕр пароходне (8 пин тонна) путарни çинчен татăклăнах палăртнă. Германин хăшпĕр бомбардировщикĕсем ĕнер Мальта утравĕ çинчи аэродромсене атакăланă. Январĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пулнă операцисенчен Германин виçĕ самолет каялла тавăрăнман.

Трансоцеан агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германири компетентнăй сынсем хушшинче Рейтер агентстви: Германин тинĕс çинчи спасательнăй службăн самолечĕсемпе разведка тăвас тĕллевпе усă курасçĕ тесе пĕлтерни тĕрĕс мар, теççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС) Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла Германин уйрăм самолечĕсем Норфолк, Кент графствисенче тата Лондон çывăхĕнче бомбăсем пăрахнă. Пысăк сиенех тăвайман, çынсем хушшинче те вилнисемпе аманнисем çук. Çĕрле сывлăшран тапăнни çинчен тревога пулман.

# Албанири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Грецин пехота чăçĕсем, артиллерипе вăйлăн персе тăнă хŭтлĕхпе, Албанири фронтăн çурçĕрти участокĕнче итальянецсене вăйлăн хĕсме пуçланă. Авиаци те палăрмаллах активлăн ĕçлеме тытăннă. Итальянецсем Корчапа Пограде хушшинчи çул çинче Греци войскисем çине бомбăсем пăрахма хăтланни ăнăçсăр пулнă, Англипе Греци авиацийĕ Итали самолечĕсене каялла хăваласа янă. Кунсăр пуçне, Англипе Греци самолечĕсем италянецсен Линпа Эльбасан хушшинче вырнаçнă позицийĕсем сине вăйлăн тапăннă.

АФИНЫ, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Англин Грецири сывлăш-çар вăйăсен штабĕ каларнă коммюникере çапла каланă: противник самолечĕсен темиçе соединенийĕ январĕн 20-мĕшĕнче Афинын Пирей порчĕ сине икĕ хутчен пырса тапăннă. Çар объекчĕсене сиен тăвайман.

Сывлăшри çапăçура противникăнне пĕр бомбардировщик персе антарнă. Англин пĕр самолечĕ анса ларнă чухне аркатса кайнă.

Греции «Пройа» тата «Катимирини» ятлă хаçатсем: çурçĕрти фронтра пĕр-пĕрне хирĕç артиллерипе вăйлăн персе тăраççĕ. Юлашки пĕлтерŭсем тăрăх, Валонăпа халăх хуларан тухса кайнă, тесе сыраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 21-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци чăçĕсем малалла кайнă, вĕсем Валона бухтинчен тăватă миляра кăна. Тепелене секторĕнче итальянецсем Саларине йышăнма икĕ хутчен хăтланнă, анчах грексем вĕсене каялла хăваласа янă. Грексем Гора тăвĕсĕнче Мукани ятлă яла илнĕ, вăл ял Москополерен тăхăр миля çурçĕр еннелле. Эльбасан секторĕнче грексем каллех Стермен ятлă юханшыв еннелле малалла куçма тытăннă.

# Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнчи вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Абиссини чиккинчен инçех мар çĕрте, Дуканран (Кения) çурçĕр еннелле, Англи войскисем противникăн туземнăй чăçĕсене тыткăна илнĕ. 11 çынна вĕлернĕ, вăл шутра пĕр офицер пур. Çăмăл пулеметсем 4 тата вăрçăн ытти хатĕрĕсене туртса илнĕ. Ытти фронтсенче пуринче те —патрульсен ĕçĕсем палăраççĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эритрейăра англичансем, Кассалăна туртса илнĕ хыççăн, хăвăрттăн малалла кайма пуçланă.

«Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Англин патруль чăçĕсем Тобрук оборонин зонине кашни кунах пыра-пыра кĕреççĕ. Итальянецсен Тобрукри гарнизонĕ икĕ дивизирен тăрать, тесе кăтартса параççĕ.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет январĕн 19-мĕшĕнче Мальта çине пырса тапăннă чухне противникăнне 19 самолет персе антарнă. 11 самолета — истребительсем тата 8-шне — зенитнăй артиллери персе антарнă.

# ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви Итали командованийĕ каларнă çакăн пек сводкăна парать: Греци фронтĕнче разведка отрячĕсемпе артиллери активлăхĕ палăрать. Итали авиацийĕн соединенийĕсем Грецин тинĕс базисем çине бомбăсем пырса пăрахнă, порт сооруженийĕсемпе суднăсене сиен кŭнĕ. Кунсăр пуçне противник войскисем пухăнса тăнă хăшпĕр пунктсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Сывлăшри çапăçура Итали бомбардировщикĕсем противникăн 4 истребительне персе антарнă. Италин пĕр самолечĕ хăйĕн базине тавăрăнман. Противник авиацийĕ Валона çине пырса тапăннă, анчах нимĕнле сиен те кŭреймен. Противникăн пĕр самолетне персе антарнă.

Киренаикăра противник авиацийĕ Тобрук крепоçĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. Крепоça кăштах сиен кŭнĕ. Вилнисемпе аманнисем çук.

Хĕвелтухăç Африкăра, Англо-Египет Суданĕн фронтĕнче, Итали войскисен отрячĕсем противникăн бронетанковăй чăçĕсене хирĕç çапăçнă. Противника чылаях пысăк çухатусем кŭнĕ. Итали войскисем Кассалăран тухса кайнă.

Итали авиацийĕ Крит утравĕ çинчи аэродром çине бомбăсем пырса пăрахнă. Аэродромра пушар тухнă. Ыран январĕн 21-мĕш тенĕ чух çĕрле противник самолечĕсем Катания (Сицилире) çине пырса тапăннă. Кăштах сиен кŭнĕ. Вилнисемпе аманнисем çук.

# Тобрука штурмлани

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «январĕн 21-мĕшĕнче ирхине ирех англичансем Тобрука хирĕç штурм пуçланă. Операцисем ăнăçлăн сарăлса пыраççĕ».

# Англи пĕлтерни

ЛОНДОН, январĕн 20-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Англи войскисем Сабдератпа Тессеней патĕнче итальянецсен вăйлăн укрепленипе туса çирĕплетнĕ позицийĕсене йышăннă, итальянецсем вĕсене хирĕç тăман та. Англи чăçĕсем халĕ те çав позицисенчен хĕвелтухăç еннелле чакакан противникпе çапăçаççĕ.

Кенире Англи чăçĕсем активлăн наступленипе туса пырса малалла куçнă. Противникăн кунта çухатусем пулнă.

Албанире Англи авиацийĕ Берат çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Пĕр çĕре пухăнса тăнă войскăсемпе мототранспорт, хулан хĕвелтухăç пайĕнчи çуртсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе вăйлă пушарсем тухнă.

# „Дейли уоркер“ хаçатăн çурчĕ çине полицейскисем пырса тапăннă

ЛОНДОН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Скотланд Ярд агенчĕсем «Дейли уоркер» хаçатăн çурчĕ çине пырса тапăннă, хаçата пичетлеме чарнă.

# Бомбăсем пăрахнипе Англире пулнă жертвăсем

ЛОНДОН, январĕн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи çине сывлăшран пырса тапăннипе декабрь уйăхĕ хушшинче граждăнла халăх хушшинче мĕнпурĕ 3.793 çын вилнĕ тата 5.044 çын аманнă. Пĕлтерŭре: сывлăшран пырса бомбăсем пăрахнипе Англире вилнисемпе аманнисен хисепĕ декабрь уйăхĕнче, малтанхи виçĕ уйăхрипе танлаштарсан, чакнă, тесе каланă. Сентябрь уйăхĕнче, Англи çине çĕрле сывлăшран массăллăн пырса тапăнма пуçласан, 6.954 çын вилнĕ, октябрьте—6.334 çын, ноябрьте — 4.588 çын вилнĕ.

# Бухарестра Германи офицерне вĕлернĕ пирки

БУХАРЕСТ, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Румынири телеграф агентстви Румынин шалти ĕçсен министерствин çакăн пек официальнăй пĕлтерŭне парать: «Январĕн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле темĕнле ютçĕршыв çынни револьвертен персе Германи офицерне вĕлернĕ. Вĕлерекенни тарса пытанма хăтланнă, анчах ăна тытнă.

БЕРЛИН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ Бухарестран çапла пĕлтерет: «Германи майорне Деринга вĕлерни çинчен паллă пулсанах, генерал Антонеску Германи посланникне çапла пĕлтернĕ: çынвĕлерене допрос туса пĕтернĕ хыççăн ăна çар сучĕпе суд тума тата çиĕнчех вĕлерме приказ панă, тенĕ. Кунсăр пуçне, генерал Антонеску Греци колонинчи паллă çынсене арестлеме приказ панă, мĕншĕн тесен çынвĕлерен Греци подданнийĕ пулнă, вăл Румынире Турци паспорчĕпе пынă».

# Финляндири тĕрлĕ партисем хушшинчи хирĕçŭсем

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Финляндри сеймĕ карел переселенецĕсене вырнаçтарса. тухасси çинчен закон йышăннăранпа çур çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Анчах та пысăк çĕр хуçисен интересĕсене тĕкĕнекен çак закон тавра халĕ те тĕрлĕ партисен вăйлă кĕрешĕвĕ пырать. Карел хресченĕсене çĕр участокĕсем пама пулнă, анчах вăл участоксене вĕсем халĕ те илеймен-ха. Пысăк çĕр хуçисем хальхи вăхăтра çав закона хирĕçле кампани сарса янă. Законран пăрăнса юлас шутпа помещиксем карел переселенецĕсем валли урăх вырăнсенче çĕр туянаççĕ. Помещиксем хăйсен округĕсенче кăна мар, тата хăйсен поместийĕсенчен çĕршер километр инçетре те çĕр участокĕсем туянма тăрăшаççĕ.

1940 çулти декабрĕн 1-мĕшĕнчех Финляндин шалти ĕçĕсен министрĕ, вăлах шведсен «халăх парти» правленийĕн председателĕ фон Борн поселени çинчен кăларнă закона улăштарма, урăх вырăнсенче çĕр участокĕсем туянмалли срока 1941 çулĕсене çити тăсма ыйтнă. Хăй Финляндин çĕнĕ правительствин составне кĕнĕ чухне фон Борн çакăн пек услови лартнă: çав срока тăсмасан правительство составне кĕместĕп, тенĕ. Фон Борн панă сĕнĕве хирĕç аграрисен партийĕн представителĕсем тăнă. Анчах та çĕнĕ правительствăна йĕркелесе çитернĕ чухне вăл ыйту тăрăх вăхăтлăх компромис тунă.

«Хельсингин Саномат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 13-мĕшĕнче фон Борн аграрисен парламентри фракцийĕ умне çакăн пек требовани лартнă: аграрисем швед помещикĕсен требованийĕсене тивĕçтерме шутласçĕ-и е çук-и, çакăн çинчен татăклă ответ памалла, тенĕ. Хальхи вăхăтра, тет хаçат, шведсен «халăх партийĕ» çĕр участокĕсем туянмалли срока 1941 çулти августăн 1-мĕшчен те пулин тăсма ыйтать. Çак требованине пурнăçа кĕртмесен, эпĕ правительство составĕнчен тухатăп, тенĕ фон Борн.

Январĕн 14-мĕшĕнче, сейм сессийĕ хупăннă хыççăн, аграрисен фракцийĕн ларăвĕ пулнă, анчах вăл ларăва фон Борн ыйтăвĕ тăрăх решенисем йышăнма пултарайман, мĕншĕн тесен, фракци членĕсенчен нумайĕшĕ ларура пулман.

Январĕн 20-мĕшĕнче «Хельсингин Саномат» хаçат фон Борна татах тепĕр хут критикленĕ. Хаçат ăна çакăншăн айăплать: Рангель правительствинче министр постне йышăнма килĕшŭ парса, фон Борн шведсен пысăк помещикĕсен интересĕсене кăна хŭтлесшĕн пулнă, тесе çыраççĕ.

—o—

# Драйзерăн çĕнĕ кĕнеки

НЬЮ-ЙОРК. январĕн 18-мĕш. (ТАСС). Америкăри «Ньюс Мэссес» журнал Драйзерăн «Америка заслуживает спасения» ятлă çĕнĕ кĕнекинчен илнĕ пĕр сыпăка пичетлесе кăларнă. Çав сыпăкра Драйзер çапла калать: «Америкăна хŭтĕлесси çинчен тата Хĕвеланăç полушарийĕнчи çĕршывсен туслăхĕ çинчен каласчи вăл — чăннипех те икĕпитленни пулса тăрать. Халĕ пулса иртекен ĕç вăл — монополистсен групписен тĕнчери гигантла кĕрешĕвĕ пулса тăрать, вĕсем пысăк услам çăлкуçĕ пулса тăракан Кăнтăр Америкăпа тата Центральнăй Америкăпа хăйсем çеç усă курма право илессишĕн кĕрешеççĕ. Германипе Италири монополистсемпе Англипе Америкăри монополистсем хушшинчи пĕртен-пĕр уйрăмлăх çакăнта: пĕрремĕшсем çапăçса илесси çинчен ŭççăнах калаççĕ, иккĕмĕшсем вара «сыхланасси» çинчен калаççĕ. Англи «хŭтленни» вăл Англи пуçпулса тăрассине пĕлтерет. Кам та кам, Центральнăй Англири халăхсем чăнах та США-ран «хŭтлĕх» кĕтеççĕ, тесе шутлать, унăн врачран канаш ыйтас пулать. Çак ĕçсенче камшăн та пулин пĕр тумлам та пулин демократи пур, тесе шутлакансен пурин те психиатртан канаш ыйтас пулать», Малалла Драйзер çапла сырать: США хăйĕн оборонăри политики çинчен уçăмлăн каласа пĕлтерĕ, «мĕншĕн тесен унăн чăн-чăн тĕллевĕ — Уолл-стриттăн агресси тăвасси, халăх интересĕсемшĕн сыхланасси мар». США демократизма çухатма пуçланă та ĕнтĕ. Анчах та Драйзер: çĕршыври прогрессивлă вăйсем США-ри демократине çăлса хăварассишĕн пыракан кĕрешŭ пуçне тăрĕç, тесе шанса калать.

—o—

# Румынин шалти ĕçсен министрĕ отставкăна тухнă

БЕРЛИН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Румынин шалти ĕçсен министрĕ генерал Петровическу отставкăна тухнă. Шалти ĕçсен министрĕ вырăнне Бухарест хулин çар комендантне Попеску генерала партнă.

ШУПАШКАРТА АЧА ÇУРАТМАЛЛИ ÇЕНĔ ÇУРТ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАРĔ. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çĕнĕ строительство тăвари килхуçи хĕрарăмне Евдокия Степановăна сестрасем киле ăсатса ярасçĕ. БАБАЕВ фото-ŭкерчĕкĕ.

# „Сĕрнĕ урапа чупать“

Пирĕн социализмлă çĕршывра финанс дисциплини йĕркеллĕ тата çирĕп пулмалла. Ăна пăсни государство умĕнче пысăк преступлени туни пулать. Финанс дисциплинине пăсакан çынсем наказани илме тивĕç.

Государство укçи-тенкин пĕр пусне те усăсăр салатмалла мар. Кашни пус укçа пирĕн социализмлă çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетнĕ çĕре, ĕççынни-сен материаллă пурнăç условийĕсене лайăхлатнă çĕре кайса пымалла.

Анчах финанс дисциплинине пăсакан, государство укçине вăрлама пăхакан çынсем пур-ха. Вĕсем пирĕн государствăн вăй-хăватне тĕреклетесси çинчен мар, пачах урăххи çинчен — мĕнле те пулин хăйсен кăсăине хулăмлатасси çинчен шухăшлаççĕ.

Çакăн пек çынсенчен пĕри вăл — Вăрмар районĕнчи финанс пайĕн заведующийĕ пулса ĕçленĕ Петр Степанович Михайлов пулать. Вăл хăйĕн тамар ĕçĕсене пытарса усраса, финанс пайĕн заведующийĕ пулса ларма пуларнă. Анчах унăн тасамар ĕçĕ, вăл ăна тем пекех пытарса пурăнма тата çуракан çынсем куçĕсене хуплама тăрăшрĕ пулин те, юлашки вăхăтра тăрăшыв çине тухрĕ.

Вăл хăйĕн ĕç вырăнĕпе усă курса, хăйне кирлĕ ĕçсене сахал мар тунă. Ăна малтанах, район центрĕнчи рабочисемпе служащисем пурăнакан çуртийĕрене ремонт тума пăхнă укçана никама килĕшмесĕрех 922 тенкĕ те 38 пус расходласа хăйĕн хваттерне илемлетме капăрлатнă. Çав вăхăтрах коммуналлă çуртра пурăннăшăн тŭлемелли 209 тенкĕ те 59 пус укçана тŭлемесĕрех тŭленĕ тесе суя документ тунă.

Государство укçипе хăйне валли кăна мар, тата Кив Шулханта пурăнакан ашшĕ валли те 915 тенкĕлĕх 33 кубла метр вутă илнĕ. Ăна турттарнăшăн государство укçинчен 230 тенкĕ те 2 пус автотранспорта тŭленĕ.

1940 çулта районри колхоз шкулĕ хупăнчĕ. Ку шкулăн пурлăхне йышăнма комисси тунăччĕ. Çав комиссин председателĕ Михайлов пулнă. Комиссин шкул пурлăхне йышăнса, ăна сутасси çинчен халăха пĕлтермелле пулнă. Анчах комисси пĕтĕм ĕçе пачах урăхла тăвать. Шкулăн лайăх япалисене комисси членĕсем хăйсен аллине тавăрса илеççĕ. Сутса тунă 1376 тенкĕ укçана государствăран пытарас шутпа Михайлов 4 уйăх хушши хăйĕн кăсъинче тытса усранă. Кун çинчен сиссен вара вăл çав укçана декабрĕн 21-мĕшĕнче тин банка хывнă.

Паллах, çакăн пек ирсĕр ĕçсем пĕччен, ăна пулăшакан çынсемсĕр пулмаççĕ. Михайлов хăйне майлă çынсене те тупма пултарнă. Вăл чыссăр ĕçе тума финанс пайĕн бухгалтерне Я. Федотова явăçтарнă. «Сĕрмен урапа чупасть» тенĕ ваттисем. Федотов çавăн пек пулнă та ĕнтĕ, вăл сĕрмесĕр ĕç туман. Михайлов государство укçипе илнĕ 33 кубла метр вутăран 3 кубла метрне Федотова укçасăрах панă. Федотовăн хваттер укçи 345 тенкĕ те 9 пус тŭлемелле пулнă. Ăна та тŭленĕ пек туса хунă, каçарнă. Çапла вара «сĕрнĕ урапан» тепĕр кусатранĕ чупма пуçланă.

Анчах ку пĕр енĕ çеç-ха. Пурнăçа малалла ярас пулсан урапан тăватă кусатранне те ĕçлеттермелле, пурне те сĕрмелле пулнă. Çапла вара черет райсовет исполкомĕн председателĕ Ярандайкин юлташ патне те çитнĕ. Ярандайкин юлташăн хваттер укçи 175 тенкĕ те 48 пус тата вутăшăн 77 тенкĕ те 55 пус тŭлемелле пулнă. Михайлов ку укçасене государство укçинчен тŭлесе хурать.

Çапла ĕнтĕ Михайлов «пурнăç» çулне такăрлатса пынă, куракан çынсен куçĕсене хупласа пынă, хăйĕн ирсĕр ĕçĕсене, государствăшăн сиенлĕ ĕçĕсене хăюллăн тунă.

Çак вăхăтрах Михайлов больницăсене, шкулсене, ветпунктсене памалли укçана памасăр тăнă. Çавна пула шкулсем вутăсăр, краçинсăр ларнă. Арапуçĕнчи больницăра тăхăнмалли халатсем, чирлĕ çынсене тăхăнмалли кĕпе-йĕмсем кирлĕ пулнă. Укçа паманни вĕсене туянма чăрмантарнă. Мăнçырмари ветпункт сивĕпе шăнса ларнă. Ĕçлеме услови пулман. Пур пек хаклă япаласем урайĕнче выртаççĕ. Шкаф, сĕтел-пукан кирлĕ т. ыт. те. Çапла пулсан та Михайлов укçа паман, вăл пĕтĕм ĕçе хăйне май килнĕ пек кăна тунă, государство çирĕплетнĕ смета уншăн закон пулман. Укçа ыйтма пынă çынсен умĕнче мăнкăмăлланса, чĕннĕ-чĕнмен çеç ларнă.

Çак ирсĕр ĕçсем пĕтĕмпех государствăна хирĕçле, ирсĕр ĕçсем пулса тăраççĕ. Кун пек çыншăн государство ĕçĕнче вырăн çук, çакăн пек ирсĕр ĕçсемшĕн Михайлов государство умĕнче пысăк наказани илме тивĕç.

Г. И. ИВАНОВ.

# Шыв мăйăрĕ е чилим

Ялхуçалăхĕнче тĕрлĕ кŭлĕсем, е юханшывсене картласа тунă пĕвесем нумай усă параççĕ. Çакăн йышши кŭлĕсенче, пĕвесенче тĕрлĕ пулăсем çитĕнтерме, шывра ишсе çŭрекен кайăксене (кăвакал, хур) усрама май килет. Пирĕн Союзри колхозсенчен нумайĕшĕ хальхи вăхăтра пулă кŭллисем, пĕвесем тăваççĕ, çапла лайăх тупăш илеççĕ. Унтан тата хальхи вăхăтра тĕрлĕ шывра çитĕнекен ŭсен-тăрансемпе усă курма тытăнаççĕ. Шыври ŭсен-тăрансене çитĕнтернĕ чух вăрлăх тупса акнă чухлĕ анчах расход тухать. Кайран нимле тăкак та пулмасть. Шыври ŭсен-тăрансене çитĕнтернĕ чух пăхмалли ăрасна ĕçсем кирлĕ мар. Шывра çитĕнекен ŭсен-тăрансем пулă ĕрчетес е хур-кăвакал усрас ĕçе те сиен тумаççĕ.

Шывра çитĕнекен ŭсен-тăрансенчен усă нумай пама пултараканни шыв мăйăрĕ—чилим пулать. Чилим пирĕн Союзри Инçет-Хĕвелтухăç шывĕсенче, Белоруссире тата Атăл тинĕсе юхса кĕрекен вырăнти кŭлĕсенче, Атăл вĕçĕнче нумай тĕл пулать.

Чилим 100—75 см. тарăнăш шывра, тĕпĕ юшкăлă вырăнта пуринчен лайăх ŭсет. Вăл пĕр çулта çитĕнекен ŭсен-тăран. Унăн шывра тăракан туна çуменче вăрăм çулçăсем хире-хирĕç тытăнса тăраççĕ. Çак çулçăсем ŭсен-тăран чеченке ларас умĕн татăла-татăла ŭкеççĕ. Шывран çŭлерех пайĕнче ромба овĕрлĕ çулçăсем çитĕнеççĕ. Çак çулçăсен тунисем вăрăм пулаççĕ, вĕсен ăшĕнче сывлăш пулать, çавăнпа ŭсен-тăран шыва путмасть. Çапла çак ŭсен-тăран шывра ишсе çŭреме пултарать, путмасть. Май—июнь уйăхĕсенче шыв сийĕнчи çулçăсем çуменче шурă чечексем тухаççĕ. Чечек пĕтĕсленнĕ хыççăн çитĕнекен çимĕç шыва апатне пулса çитичченех шывра юлать. Вара хура тĕслĕ çимĕç пулать, унăн пысăккăшĕ чăх çăмарти пысăккĕшĕпе тан пулать. Çитĕннĕ çимĕçсенчен хăй-пĕри шыва татăлса ŭкеççĕ, хăшĕ татăлмаççĕ. Кайрантарахпа пĕтĕм ŭсен-тăран хăйĕн çимĕçĕсем аялалла турт-нипе шыв тĕпне выртать. Çимĕçсене духнă чухне ŭсен-тăрансене туртса кăлараççĕ те, çимĕçĕсене татса илеççĕ. Кашни тунара вунна яхăн çимĕç пулать.

Чилим çимĕçне пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарас пулсан, нŭрлĕ хăйăр ăшĕнче, е шывра куçарас пулать. Унсăрăн вăл шăтми пулать. Акас пулсан кĕркунне е çуркунне акас пулать. Çуркунне акиă хыççăн ŭсен-тăранĕ икĕ-виçĕ эрнерен шăтса тухать. Акнă хыççăн ŭсен-тăрана пăхса чăрманмалли ĕçсем çук.

Чилимăн шурă тĕшĕ çиме юрăхлă, унăн тути каштан текен çимĕç тути евĕрлĕ, çакăн пирки ăна французсем шыври каштан теççĕ. Ост-Инди, Япони, Китай халăхĕсем чилим çимĕçне авалтанпах юри çитĕнтерсе усă курма пуçланă. 1898 çулта Приморье облаçĕнче тырă начар пулнă. Çав çул çавăнта пурăнакансенчен 400 кил Типцево ятлă кŭлĕ тĕпĕнчен кăларнă чилимпе пĕр çул тăранса пурăннă. Астрахань таврашĕнче пурăнакансем тахçантанпах çак чилимпа усă кураççĕ.

Чилим тĕшшин химиллĕ составĕ çăкăн пек: азотлă япалашсем 20 процент, çусем—0,7 процент, углеводсем (крахмал, сахăр)—55 проц., клетчатка—1,4 процент, минераллă япаласем (кĕл)—3 проц. Чилим хупписенчен 7 проц. яхăн тирсене, сăран тума юрăхлă япалашсем кăларса илме пулать.

Крахмал хисепĕпе шутласан чилим ыраш, тулă çăнăхĕнчен кăштах кайра. Азотлă япалашсем тĕлĕшĕнчен пăрса çăнăхĕ патнелле çывхарать.

Çапла çак чилима тĕрлĕ кŭлĕсенче, пĕвесенче акса çитĕнтерме тытăнсан, чилим пирĕн хуçалăха нумай усă памалла. Вăл ахаль çиме анчах мар, кондитер промышленноçĕнче те нумай усă пама пултарать.

К. Ф.

ТЕАТР

# „Золушка“

Чăвашсен Государство Академи Театрĕ январĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа В. Ардов çырнă «Золушка» ятлă 3 пайлă 6 картинăллă комедине лартма тытăнать.

Вырăс халăхĕн юмахĕ тăрăх ĕлĕкавал пĕр чухăн хĕр пурăннă, тет. Ăна пурте кŭрентернĕ... тĕрлĕ хура ĕççем ĕçлеттернĕ. Çав хĕр, кил таврашĕнче ĕçленĕ хушăра, хăйĕн питне кĕлпе ним палăрми варалана, çавăнпа та ăна вара «Золушка» тесе ят панă, тет. Анчах кайран çав хĕр палларан та паллă ĕççем туса, пĕтĕм халăх умĕнче чапа тухнă, вара ун хыççăн тĕрлĕ принцсем чупнă, тет.

Патша саманинче ĕçхалăхĕн пурнăçĕ çавтери йывăр та асаплă пулнă. Ун чухне ĕçхалăхĕ ирĕклĕ пурнăç çинчен юмахра çеç асăннă.

Октябрьти аслă революци этемлĕхе ĕмĕр-ĕмĕр тыткăнра тытса пурăннă сăнчăра çапса салатрĕ, ĕççыннисене ирĕке кăларчĕ. Куллен кун чечекленсе пыракан совет çĕршывĕнче чăн-чăн мухтава тивĕç çынсем çĕршерĕн, пиншерĕн ŭссе çитĕнчĕç. Çавăн пек мухтавпа витĕннисенчен пĕри пулса тăрать те ĕнтĕ Ардов комединче кăтартнă героиня Настя Кожина.

1933 çул. Настя, тăлăха юлнă хыççăн, пĕчĕк хулана, пĕр бухгалтер патне ача пăхма вырнаçать. Пурăнасса вĕсем гостиницăра пурăнаççĕ. Унта вăл фабрикăри партком секретарĕпе Пронинăпа тата инженер Лебедевпа паллашать. Пронина Настяна вĕренме вырнаçтарать. Килхуçи арăмĕ хăваласа кăларнă хыççăн Настя пир-авăр фабрикинче ĕçлеме пуçлать. Настя, фабрикăра ĕçленĕ хушăрах, çĕр çывăрмасăр вĕренет. Тăватă станокпа ĕçлес вырăнне сакăр станокпа ĕçлесе рекорд тăвать. Кайран çĕр утмăл станокпа ĕçлеме тытăнать. Ăна Пронинăпа Лебедев яланах пулăшса пыраççĕ. Çапла вара тăлăх хĕрача тĕнчипе паллă стахановка-орденоносец пулса тăрать.

Комедире паллă рольсенче çак артистсем выляççĕ:

Настя Кожина ролĕнче — Е. Андреевăпа М. Еграшкина, Талдыкин ролĕнче — РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. Алексеев, Пронина — Т. Петрова, Лебедев — А. Ургалкин, Дорохов — ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. Молодов.

Спектакле лартаканĕ Чăваш АССР искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ Н. Айзман.

—o—

# Ситĕннисене вĕрентессине кирлĕ пек организацилемен

ÇĔРПУ. Ямашри туллимар вăтам шкулти учительсем федякинецсен чĕнĕвне сŭтсе-явнă хыççăн ситĕннисене хутла вĕрентес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме тытăннă. Учительсем хутла пĕлмен е сахал пĕлекен колхозниксем патне килĕрен сŭресе вĕрентеççĕ. Степанов юлташ ситĕннисене хутла вĕрентес ĕçре пример кăтартса пырать.

Пур çĕрте те Ямаш ялсоветĕнчи пек ĕçлемеççĕ. Нĕрĕш ялсоветĕнче те шкул тата учительсем пур. Апла пулин те Чиричкассинче хутла сахал пĕлекенсене 20 çынна вĕренĕве явăçтарман. Лапра-Кушкăра хутла сахал пĕлекенсем 38 çын. Вĕсене пĕрне те вĕренĕве хутшăнтарман.

Районĕпе илсен хутла пĕлменнисем 301 çын, сахал пĕлекенсем 669 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен хутла пĕлменнисене 238 çынна тата сахал пĕлекенсене 387 çынна çеç вĕренĕве хутшăнтарнă. Ситĕннисене вĕрентсе кăлармалли срок тахçанах иртнĕ ĕнтĕ. Апла пулин те çак ĕçе вĕçлеме васкамаççĕ.

(Хамăр корр.).

—o—

# Стена хаçат редакторĕсемпе селькорсен канашлăвĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Колхозсенчи стена хаçат редакторĕсемпе селькорсен çак кунсенче пулса иртнĕ канашлăвĕ çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра стена хаçачĕсем умĕнче тăракан задачăсене тата Красноармейский районри «Стахановец» стена хаçат редколлеги чĕнсе каланине сŭтсе-яврĕ. Доклад тăрăх пренире стена хаçат редакторĕсем, селькорсем 6 çын тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен опычĕсене тата стена хаçачĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене çутатса пачĕç.

Канашлу «Стахановец» стена хаçат редколлеги чĕнсе каланине ырласа, партин XVIII конференци ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнма йышăнчĕ.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

ШУПАШКАРТИ
вăрман суту-илŭвĕн склачĕ

колхозсене, колхозниксене тата мĕнпур граждăнсене тĕрлĕрен ассортиментлă **чус хăмисем, çурса хатĕрленĕ стройматериалсем, стройкăна юрăхлă пĕренесем, горбуль, полуфабрикатсем, вутă тата ытти материалсем те сутать.** Илекенсен укçине çийĕнчех тŭлемелле.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Перевозная, д. № 8/а, телефон № 6—34.

Чебторгсклад.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—[illegible] экономика пайĕн—0—88, çыру-семпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Капкăн» тата «Ĕçхĕрарăмĕ» журналсен—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2200.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.